Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

26 (2438) [1]
Хакӗ ирӗклӗ
Эрнере икӗ хут тухать

2014,
ака, 9

1991 ҫулхи ака уйӑхӗн 21-мӗшӗнче тухма тытӑннӑ

# Ял хуҫалӑхне аталантармалли программӑсем ӗҫлеҫҫӗ

**Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев «Хыпар» тата «Советская Чувашия» хаҫатсене панӑ интервьюран**

**ПРОМЫШЛЕННОҪ ҪИНЧЕН**

**– Михаил Васильевич, калаҫӑва Чӑваш Енӗн пысӑк промышленноҫӗн теминчен пуҫлани вырӑнлӑ ахӑр. Пӗлтӗр унӑн аталанӑвӗ чакрӗ. Промышленноҫ производствин ӳсӗм никӗсне ӑҫта куратӑр? Иртнӗ ҫул Красноармейски районӗнче кирпӗч завочӗ, "Етӗрнесӗт" завод хута кайнӑччӗ, кӑҫал ҫавнашкал проектсем пурнӑҫланасса кӗтме пулать-и?**

– Пӗлтӗр пысӑк промышленноҫ анса ларчӗ тесе каламӑттӑм. Ҫапла, хӑвӑрах пӗлетӗр, Раҫҫейри, тӗнчери финанс рынокӗсенчи вӑл е ку процессене кура уйрӑм ыйтусем пур. 2008-2009 ҫулсенче чи малтанах машиностроени отраслӗ палӑрмаллах чакнӑччӗ. Иртнӗ ҫулталӑк пуҫламӑшӗнче эпир аталанӑвӑн икӗ вариантне палӑртнӑччӗ. Ҫулталӑк вӗҫӗнче 98,6% шайне ҫитрӗмӗр. Ҫапла вара пирӗн прогнозсем тӳрре тухрӗҫ.

Иккӗмӗшӗнчен, республика шайӗнче аталану стратегине ҫирӗплетнӗ, инвестици проекчӗсене палӑртнӑ. Банк сферинчи ӗҫ-пуҫа шута илсен тӗп вырӑнта – бюджет тулашӗнчи ҫӑл куҫсене явӑҫтарасси. Уйрӑм проектсене илес тӗк – Ҫӗнӗ Шупашкар монохула пулнӑ май кал-кал аталанать. Кӑҫалах клинкер плитки, брусчатка кӑларма пуҫлатпӑр. Халӗ усӑ куракан брусчатка темиҫе ҫултанах арканма пуҫлать, кунта вара ҫӗнӗ технологисем – ҫӗнӗ брусчатка 50 градус сивве, 50 градус шӑрӑха та йӗркеллӗ тӳсӗ, пирӗн климатшӑн вырӑнлӑ.

"Трактор завочӗсем" концерн модернизаци ҫулӗ ҫине тӑчӗ. Нумаях пулмасть пирвайхи "Агромаш" комбайн тухрӗ, унта ҫӗнӗ 200 ӗҫ вырӑнӗ йӗркеленӗ. Электротехника промышленноҫӗн сферинче ҫӗнӗ производствӑсем уҫӑлаҫҫӗ. "Экра" 10 пин $м^2$ лаптӑклӑ ҫӗнӗ производство уҫать, унта та ҫӗнӗ ӗҫ вырӑнӗсем хушӑнаҫҫӗ.

**– Ҫӗнӗ комбайн тенӗрен – ҫак ӗҫ ӑнӑҫлӑ пуласса ӗненетӗр-и? Производство пур, завод хӑйӗн интересӗсене лоббилесе пулӑшма ыйтмасть-и?**

– Тӗрлӗрен хаклама пулать. Бизнесменсем ҫак комбайн Раҫҫей рынокӗнче кирлине тӗпченӗ, ял хуҫалӑх таварӗ туса кӑларакансене вӑл кирлӗ. Машина – ҫӗнетнӗскер, тӗш тырӑ пухса кӗртес тӗлӗшпе ассортимента анлӑлатнӑ. Красноярскра туса кӑларни тӗш тырӑ валли кӑна пулнӑ, ҫӗнни вара куккуруса та тӗшӗлет. Кирек мӗнле пулсан та – производителӗн техника пахалӑхне тивӗҫтермелле. Ӑна туянӗҫ-и – пӗтӗмпех пахалӑхран килет. РФ Правительстви Раҫҫейре, Беларуҫра, Казахстанра туса кӑларакан техникӑна туянма каякан тӑкаксене кӑна субсидиленине шута илсен ҫак техникӑна туянакансем пулмалла.

Паллах, производствӑна кунта куҫарни логистикӑпа та ҫыхӑннӑ. Красноярск крайӗнче тырӑ ҫитӗнтересси Атӑл тӑрӑхӗнчи пекех аталанман. Кунта кӑнтӑр енчи регионсем те сывӑхрах. Ҫӗнӗ комбайнпа ҫыхӑннӑ ӗҫ ӑнасса шанни пирки калас тӑк – эпир кун пирки калаҫма кӑна пултаратпӑр, ҫак философи нимӗн те улӑштармӗ. Сӗнӳ тата ыйту – вӗсем енсене тивӗҫтерӗҫ-и, пӗтӗмпех ҫакӑнтан килет. Ку енӗпе заводӑн малашлӑхӗ пурри иккӗлентермест. Комбайнсем рынокра кирлӗ.

3-мӗш стр. ➔

## КӖСКЕН

### Кооперативсен съездӗнче

Кӑҫалхи ака уйӑхӗн 3-4-мӗшӗсенче Санкт-Петербург хулинче пӗтӗм Раҫҫейри агропромышленноҫ куравӗ йӗркеленӗ, ҫак анлӑ мероприяти шайӗнче ялти кооперативсен II съезчӗ иртнӗ. Унта Раҫҫей Федерацийӗнчи 76 регионран 700 ытла ҫын хутшӑннӑ. Чӑваш Ен делегацине (унта Сӗнтӗрвӑрри, Тӑвай, Муркаш, Красноармейски, Шупашкар районӗсенчи ял хуҫалӑх производство кооперативӗсенчен, Чӑвашпотребсоюзран хутшӑннӑ) "Агро-Инноваци" КУП директорӗ Николай Васильев ертсе пынӑ.

Форумра ялти кооперацие патшалӑх пулӑшӑвӗпе мала ямалли майсем, вӗсене саккун тӗлӗшӗнчен ҫирӗплетесси ҫинчен калаҫнӑ, ял хуҫалӑх таварӗ туса кӑларакансене укҫа-тенкӗпе ҫӑмӑлрах мелпе тивӗҫтерессипе, ялсене аталантарассипе ҫыхӑннӑ ыйтусене сӳтсе явнӑ. Тӗрлӗ секцине хутшӑнса делегатсем тухӑҫлӑ ӗҫленӗ.

### Сӳрелеме тухнӑ

Республикӑри чылай хуҫалӑхра ҫурхи ӗҫсем пыраҫҫӗ. Акционерсен "Батыревский" пӗрлешӗвӗнче кӗрхисене 1055 гектар ҫинче, нумай ҫул ӳсекен курӑксене 300 гектар ҫинче апатлантарнӑ. Тутлӑхлӑ выльӑх апачӗ хатӗрлеме май паракан курӑк пуссине сӳрелеме тухнӑ.

Ҫӗр улми лартма хатӗрленсе ӑна 1920 тонна яровизациленӗ. Тепӗр 1080 тоннине кӑчкӑлантарма хунӑ.

### Ҫӗр улми ӳстерекенсене – субсиди

Чӑваш Республикин Ял хуҫалӑх министерстви федерацин аграри ведомствине вырӑнти экономикӑшӑн пӗлтерӗшлӗ тӑхӑр программа тӑратнӑ. Иккӗшне пӑхса тухнӑ та ӗнтӗ. Республикӑра мелиорацине тата ҫӗр улми туса илессине аталантарма Раҫҫей бюджетӗнчен укҫа уйӑраҫҫӗ. Пӗлтӗрхи пекех шӑвармалли техника туянма тӑкакӑн 50 процентне саплаштараҫҫӗ. Иртнӗ ҫул хуҫалӑхсем ҫак субсидипе анлӑн усӑ курнӑ.

Ҫӗр улми ӳстерекенсем чӗр тавара упрамалли хуралтӑсем тунӑ е туяннӑ чухне, логистика тытӑмне йӗркелеме тӑкакӑн 30 процентне субсидилессе шанма пултараҫҫӗ. Республика бюджетӗнче тӗллеве пурнӑҫлама 28,5 млн тенкӗ палӑртса хунӑ. Ҫакӑнпа пӗрле федераци мӗн чухлӗ тӳлесси хальлӗхе паллӑ мар.

"Ку пирӗншӗн ҫӗнӗлӗх, халӗ эпир субсидисене уйӑрмалли правилӑсем хатӗрлетпӗр. Ҫӗр улми туса илекенсем тухӑҫа ӳстерме, унӑн пахалӑхне лайӑхлатма пултарӗҫ. "Иккӗмӗш ҫӑкӑра" паян 5-6 ҫул каяллахи пек тупӑшлӑ е тӑкаксене саплаштармалла вырнаҫтараймастӑн", – тенӗ республикӑн ял хуҫалӑх министрӗ Сергей Павлов.

## ЧӐВАШӐННЕ ТУЯНАР

***... Кӗтӳ яриччен ӗне суса ӗлкӗрнӗ анне сӗтел ҫине кӑпӑклантакан курка пырса лартатчӗ те " Сывлӑха пултӑр" тесе ӗҫе пуҫтарӑнатчӗ. Ҫак самантсем час-час аса килеҫҫӗ. Ӗне тытнӑ ҫын аптраман, пурнӑҫа ӱйӑнеҫтеркеленӗ. Индире ав вӑл чи сӑваплӑ чӗр чун вырӑнӗнче. Чӑваш та ӑна сума сӑвать, выльӑх сывмарлансан ҫын чирленӗ евӗр кулянатпӑр-ҫке. Хамӑр туса илнӗ сӗтрен пахи мӗн пултӑр ӗнтӗ.***

Елчӗк районӗнчи Хӑвӑлҫырмара ӳснӗ Федор Волков ача чухне хӑйӗн пурнӑҫӗ сӗт отраслӗпе ҫыхӑнасси ҫинчен шухӑшламан пулӗ. Ашшӗ Николай Алексеевич ӗмӗр тӑршшӗпе машинӑпа ӗҫленӗрен правур йӗкӗт ытларах



Правительство пуҫлӑхӗ И. Моторин заводпа паллашнӑ самант

# «Хамӑра кӑтартма вӗренмелле»

техникӑпа кӑсӑкланнӑ. Тӗрӗссипе, паян та, предприяти пуҫлӑхӗн тивӗҫӗ вӑхӑта нумай илет пулин те, автомобильпе мотоциклсӑр пурӑнаймасть. Вӑрнарти типӗтнӗ сӗт кӑларакан завод ӗҫ-хӗлне ҫутатнӑ журналистсем ҫакна палӑртаҫҫӗ: пӗтӗм технологи процесне сехет механизмӗ евӗр йӗркеленӗ, пур тытӑм (сӗт йышӑннинчен пуҫласа хатӗр продукци тавар туянакан патне ҫитиччен) пӗр кӑлтӑксӑр ҫаврӑнать. Ку ӳсӗм патне чӑваш хастарӗ ҫивӗч ӑс-тӑнӗпе, ҫӑл куҫ пек таппа тӑракан вӑй-халӗпе ҫитнӗ.

Паллах, И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗн экономика факультетӗнче "Организацисен менеджменчӗ" специальноҫа алла илнӗ, каярах ҫунтармалли-сӗрмелли материалсен бизнесӗнче тӑрмашнӑ ҫулсем – шухӑш-кӑмӑл ҫирӗпленнӗ тапхӑр.



2-мӗш стр. ➔

## ҪАНТАЛӐК

| Шупашкарта | Вӑхӑт | 9.04 | 10.04 |
|---|---|---|---|
| Температура, $^0С$ | 2–4 сехетре | –4 | –5 |
| | 14–16 сехетре | +2 | +1 |
| Юр ҫӑвать | | – | – |
| Атмосфера пусӑмӗ, мм | | 747 | 753 |




Ипотечный кредит

Звонок по России бесплатный
8 800 200-02-90 | www.rshb.ru
ОАО «Россельхозбанк». Генеральная лицензия Банка России № 3349. Реклама.
г. Чебоксары, Президентский б-р, 31
тел.: 8 (8352) 66-22-06


# «Хамăра кăтартма вĕренмелле»

1-мĕш стр.

2000 çулта тĕп директор должноçне йышăнсан предприятие çĕнĕ сывлăш вĕрсе кĕртессе хытă ĕненнĕ пулас. Федор Николаевич сăн-сăпатне уçса паракан лайăх ен вăл – шухăш тытнине, сăмах панине вĕçне çитерни. Пĕрремĕш ĕç укçи илсен ача пек хĕпĕртенĕ вăхăтсем тахçанах хыçа юлнă. Паян тăван республикăшăн, халăхăмăршăн усăллă ĕç тунине ăнланса илетĕн те тата пĕлтерĕшлĕрех тĕллевсемпе хавхаланатăн.

Волковсем – ĕçе ăнтаракан маттур йăх. Пиччĕшĕсем Иванпа Петр Етĕрне, Муркаш, Тăвай, Патăрьел, Вăрнар, Йĕпреç, Элĕк районĕсенче халăхран сĕт пухассине аван йĕркелесе пыраççĕ, ăна кунти завода леçеççĕ. Ял çыннине ултталас йăла çук, укçапа вăхăтра татăлаççĕ.

Кăçал – предприятин 80 çулхи юбилейĕ. Самана таппинчен юлас мар тесен производство хăватне çĕнетсе пымалла. Юлашки çулсенче курăмлă улшăну чылай. Республикăн ял хуçалăх продукцине тирпейлекен предприятийĕсене çĕнетмелли программине кĕни пысăк пулăшу панине палăртрĕ Волков. Цехсенче вырнаçтарнă ку чухнехи оборудование кирек кам та ăмсанĕ. Чехипе Германире ăсталанисем. Вĕсене туянма завод укçине нумай хывнă. Санитарипе тасалăх нормине çирĕп пăхăнаççĕ. Производство культурине çӳллĕ шая çĕкленĕ çакнашкал предприяти пурришĕн чăннипех хĕпĕртетĕн. Отрасльти ытти коллективсемшĕн кăтартуллă тĕслĕх.

Чăвашăнне туянăр тени пирĕншĕн чĕнӳ шайĕнче янăрать, Федор Волковшăн вăл кулленхи ĕç пархатарĕ, пурнăç ăнтăлăвĕ. Завода чĕр тавар кӳрсе килекен хуçалăхсене те, ялсенче сĕт пухакансене те пахалăх виçине пăхăнса тирпейлĕ ĕçлеме хăнăхтарнă. Кунне 150 тонна сĕт йышăнаççĕ. Етĕрне, Муркаш, Патăрьел тата Тăвай районĕсенче çимĕçе сивĕтмелли центрсем уçни ун пахалăхне упрама май парать. Вăрнарсен сĕт-турăхне Чăваш Енре хапăл тунипе пĕрлех ăна Мускав, Питĕр, Рязань, Чĕмпĕр тăрăхне нумай ăсатаççĕ.

Производствăна çĕнетесси, рынока экологи тĕлĕшĕнчен таса апат-çимĕçпе тухасси – пĕчченн-иккĕн тумалли ĕç мар. Тĕп директор нумай хушамат асăнчĕ. Вĕсен йышĕнче – Л.А.Семенов тĕп инженер, Н.В.Жуков тĕп механик, Т.Н.Логачева тĕп технолог, Л.В.Сидорова аслă мастер, лаборатори пуçлăхĕ О.И.Павлова, коммерци директорĕ В.В.Антонова, И.И.Антонюк аслă менеджер, Э.М.Кошкина тĕп бухгалтер, ун çумĕ Е.И.Одырева, А.М.Михайлова бухгалтер тата ыттисем. Чылайăшĕн ĕç стажĕ 30 çул ытла.

Предприятин хăйĕн "Кольцовка" агрофирма пур. Унăн директорĕ – О.М.Кошкин. Çĕр лаптăкĕ пин гектар ытла. Сăвакан 500 ĕне, кĕтĕве пин пуçа çитересшĕн. Ĕне сĕчĕ чĕлхи çинче тенешкел хамăрăн улăх-çаран сĕткенĕпе тутлăланнă çимĕçе нимĕнпе те улăштараймăн.

Республикăра типĕтнĕ сĕт кăларакан пĕртен пĕр предприяти хатĕр продукцие мĕншĕн "Белоусовы" ятăмпа ăсатни шухăша ячĕ.

– Хирте ĕçлесе ĕшеннĕ хыççăн арçын чӳлмекрен сĕт е турăх ĕçнине курнă-и – ун тута хĕррипе сухалĕ пас тытнă евĕр шуралать. Вырăсла "белые усы" тени. Çавăнпа пурне те ăнланмалла пултăр тесе "Белоусовы" ят хутăмăр. Асăннă брэндпа Раççейри куравсене тухатпăр. Чи пысăк пахалăхлă сĕтрен хатĕрленĕ продукцие хитре чĕркесе сутассине йĕркелетпĕр. Сĕт фестивалĕсене хутшăнса нумай награда çĕнсе илнĕ. Ĕçлеме ӳркенместпĕр пулсан хамăра кăтартма вĕренмелле, ыррипе мăнаçланмалла пирĕн, – терĕ Федор Волков.

**Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.**

МĔН АКАТĂН...

# Вăрлăх – тухăç никĕсĕ

**Раççей ял хуçалăх надзорĕн республикăри управленийĕн специалисчĕсем палăртнă тăрăх – хăш-пĕр хуçалăхра вăрлăх сортне те палăртмаççĕ.**

### МĔН ШĂТСА ТУХĔ-ШИ?

Тĕрĕсленĕ 437 (13,36 пин тонна) партирен 39-ăшĕ (0,59 пин тонна) паллă мар сорт пулнă. 11-ĕшĕ (0,37 пин тонна) патшалăх стандарчĕпе килĕшсе тăман. 118-ăшĕнне (2,61 пин тонна) сортне кăна мар, шăтаслăхне те тĕрĕслеттермен.

2013 çулта Чăваш Енри ял хуçалăх культурисен 1,418 пин тонна вăрлăхне Хусанти ветеринари лабораторине ăсатнă. Хĕпĕртемеллиех çук: 197,04 тонна патшалăх стандартне тивĕçтермест.

Алла пулин те республикăра пахалăхсăр вăрлăхпа усă кураççĕ теме чĕлхе çаврăнмĕ. "Вăрлăх – тухăç никĕсĕ", – тенине асра тытакансем ăна специалистсене кăтартма тăрăшаççĕ. Урăх регионтан кӳрсе килекен е пирĕн патран каякан вăрлăх тĕлĕшпе инспекторсем тĕрĕслев йĕркелеççĕ. Çакна валли заявка е çыру çырмалла. Пĕлтĕр 156 парти тĕлĕшпе тĕрĕслев пулнă, ку вара 140 тонна ӳсен-тăран вăрлăхĕ. Сорт тата шăтаслăх пахалăхне çирĕплетекен – 99 сертификат, вăрлăх тĕлĕшпе панă – 63 свидетельство, тĕпчевсен 342 протокол чăнлăхне тĕрĕсленĕ. Çавăн пекех апробацин тата регистрацин çĕр-çĕр акчĕпе, ытти документпа паллашнă.

### ÇĔР УЛМИ – ХИСЕПРЕ

Ял çыннишĕн тыр-пултан ытла çĕр улми хисепре пулĕ. Управлени специалисчĕсем "иккĕмĕш çăкăр" вăрлăхне çулсерен тĕпчеççĕ. Пĕлтĕр, сăмахран, 12 хуçалăхра çĕр улмине сиенлĕ хурт-кăпшанкă е чирчĕр тапăннипе-тапăнманнине уçăмлатнă. Лаборатори ĕçченĕсем сисчĕвленме сăлтав тупман.

Кăçал 13 хуçалăхра 2,5 пин тонна сутлăх çĕр улмине тишкернĕ. Хусанти лаборатори экспертизи Чăваш Республикинче асăннă пахча çимĕçе туса илекен аграри предприятийĕсенче лару-тăру япăх маррине çирĕплетнĕ. Тĕрĕсрех каласан, хăрушă карантин объекчĕсене – çĕр улми ракĕпе лĕпĕшне, çĕрĕке, ылтăн тата шупка нематодăсене – асăрхаман. Ун вырăнне ризоктониоз, ахаль тата кĕмĕл кукша, типĕ çĕрĕк чирĕсене тупса палăртнă.

### ПĔР ЙЫШШИ ÇИТМЕНЛĔХСЕМ

Кăçал та инспекторсем çитменлĕхсем тупса палăртаççĕ. Акă "Канаш хула ярмăркки" обществăн территорийĕнче Киров облаçĕнчен илсе килнĕ люцерна, клевер, костер тата ытти вăрлăха ала витĕр кăларнă. Ӳсен-тăран карантинĕ çинчен калакан саккуна пăсни çиеле тухнă. Чи малтанах урăх регионтан килнĕ тавар çинчен тивĕçлĕ надзор органне пĕлтермен. Сиенлĕ хурт-кăпшанкăпа чир пуррине те тĕпчеттермен. Сорт тата шăтаслăх пахалăхĕ те паллă мар.

Нумаях пулмасть Шăмăршă тата Елчĕк районĕсенчи темиçе хуçалăха тĕрĕсленĕ. Вĕсен вăхăтран вăхăта сăнавсем ирттермелли плансем пулман. Ку йышши мероприятисен пĕлтерĕшĕ пысăк, вĕсене сăтăрçăсене вăхăтра тупса палăртса пĕтерес тĕллевпе йĕркелеççĕ. Сăмах май, ку тĕлĕшпе йĕркене пăхăнманни унта та кунта тĕл пулнине палăртаççĕ инспекторсем. Вăрлăх паха йышши пулнине çирĕплетекен документсене ку хутĕнче те кăтартайман.

Çын йăнăшĕнчен вĕренме хушнă ватăсем. Çӳлерех асăннă çитменлĕхсенчен хăтăлас тесе специалистсемпе канашлани пăсмĕ.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
**Раççей ял хуçалăх надзорĕн республикăри управленийĕн специалисчĕ.**

АЛЛА – АЛ ĔÇĔ

# Халăхра ăста йышлă

Раççей Президенчĕн хушăвĕпе килĕшӳллĕн 2014 çула Культура çулталăкĕ тесе палăртнă. Отрасльте лайăххи те, туса çитереймени те чылай. Алла пулсан ĕçлемелĕх пур. Тепĕр чухне çӳпçап айне пулатпăр. Çырма-çатрара, çул хĕррисенче пластик савăт йăваланать. Çамрăксем йĕркене пăсас çул çине тăраççĕ. Каллех айăпне хамăрта шырамалла. Культура çурчĕсенче кашни кун мероприяти йĕркелесен унта çул такăрлатакан тупăнатех. Шашка-шахмат вăййине пĕлекен те, спорта юратакан та, тĕрĕ-çĕвĕпе ташă-юрă ăстисем те сахал мар вĕт пирĕн хушăмăрта. Çар хĕсметĕнче пулнисен, ĕçре малта пыракансен какçĕсене ирттерсен те аван.

Кĕнеке вулакансен йышĕ чакнине пытарма кирлĕ мар. Анчах вулавăшра ытти мероприяти те йĕркелеме пулатьçке. Патăрьел районĕнчи тĕп библиотекăра ĕçлекенсем çак йĕркепе пурăнаççĕ те. Кунта тĕрĕ ăстисен куравне виççĕмĕш хут йĕркелерĕç. Çавна май тĕрĕ илемĕпе миçе çын киленмерĕ-ши?! Пĕтĕмлетсе каласан иртен-çӳрен, ваттивĕтти кĕрсе курнĕ унта.

Ку хутĕнче Тамара Маринăн хĕресле тĕрленĕ ĕçĕсене тăратнă. Именкасси ялĕнчи Г. Маркиданова курава малтанхи кунах çитнĕ. Тепĕр кунне кӳршине В. Григорьевăна пĕрле илсе килнĕ. Çакăн пирки сĕнӳсен кĕнекинче палăртнă вăл. Патăрьелĕнче пурăнакан В. Ярушкина та курав пирки ыррине çеç çырать: «Тĕлĕннипе пĕр хушă чĕлхесĕр пулса тăтăм. Алă ĕçĕсем пурте чĕррĕн курăнаççĕ».

Кивĕ Катекри хĕрарăмсем унта ятарласа пынă, тус-тантăшĕн ĕçĕпе хăпартланаççĕ вĕсем. Патăрьелĕнчи райпора ĕçлекенсем те Тамара Николаевнăн ĕçĕсемпе кăмăллă. Вăл хăй вăхăтĕнче А. Пыркинăпа М. Платонова сутуçăсене те «çак чирпе чирлеттернĕ».

Курава 43 ĕç тăратнă. Калăпăшĕпе те, тематикипе те тĕрлĕрен вĕсем. Çут çанталăк илемĕ, чечек, выльăх-чĕрлĕх, чĕр чун тĕнчи, ача-пăча юратăвĕ пир çине куçнă. Тамара Николаевна пахча ĕçне юратни, чечеке кăмăллани палăрать.

– Тĕрĕ тĕрлеме ачаранах юрататăп. Пĕр вăхăт ку ĕçе алăран ятăм. Пĕррехинче ятарлă журнал туянтăм. Ун хыççăн каллех йĕппе çип тытрăм. Хĕллехи каçсем вăрăм. Мĕншĕн вĕсене кĕскетес мар? Халĕ хĕр те тĕрлет. Вăл та «Хĕресле тĕрлетпĕр» журнал йĕркеленĕ конкурса хутшăнса пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕ», – кăмăллăн сăмахлать хĕрарăм.

Пирĕн пĕр-пĕринчен вĕренмелли тупăнатех. Ăсталăхпа ытти çынна та паллаштармалла. Курава килекенсене çакнашкал журналсем те килĕшеççĕ. Библиотекарьсен халăхпа хутшăнса ĕçлессин пĕр енĕ мар-и çакă?

**Альбина АСТРАХАНЦЕВА.**

# Ял хуҫалăхне аталантармалли программăсем ĕҫлеҫҫĕ

1-мĕш стр.

### ЯЛ ХУҪАЛĂХĔ ҪИНЧЕН

**– "Хыпар" вулаканĕсен тĕп йышĕ – ял ҫыннисем. Ҫавăнпа та ял хуҫалăх ыйтăвне ҫĕклемесен каҫармĕҫ. Иртнĕ ҫулталăк аграрисене тĕрĕслемеллипех тĕрĕслерĕ...**

– Ҫапла, юлашки ҫулсенче ҫанталăк хресченĕн ĕҫ кăтартăвĕсене пысăк витĕм кӳчĕ. Аграрисем ҫурхи ĕҫсене пурнăҫланă май ҫак ĕҫ уссине темиҫе уйăхран тин кураҫҫĕ. Ҫанталăк вара тивĕҫлĕ тӳрлетӳсем кĕртет. Пĕлтĕр пирĕн кăтартусем 10% патнелле чакрĕҫ. Чи малтанах – ӳсен-тăран ҫитĕнтерессипе. Ҫав вăхăтрах – выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те. Выльăх шучĕ чакрĕ. Ҫав шутра уйрăм ҫынсем тытаканни те. Кунта ҫакă та палăрать: ҫынсем лайăхрах пурăнма пуҫлаҫҫĕ те – ял хуҫалăхĕнчи йывăр ĕҫпе аппаланасшăн мар. Бюджет сферин ĕҫченĕсен шалăвĕ ӳсет – ҫакă та пурнăҫ культурине, производство культурине витĕм кӳрет.

Кăҫалхи ĕҫсене илес тĕк – эпĕ аграрисемпе тĕл пултăм, вырăнсенче ыйтусене сӳтсе явнă. Районсенче тивĕҫлĕ ĕҫ пырать. Иртнĕ ҫулăн япăх витĕмĕ сисĕнет: пурлăх ресурсĕсем, вăрлăх тĕлĕшпе. Паян тĕллевсем палăртнă, патшалăх операторĕсем, Ял хуҫалăх министерстви ĕҫлеҫҫĕ. РФ Ял хуҫалăх министерстви укҫа уйăрать, тĕрев пулĕ. Акакан-лартакан лаптăксене кăҫал 3-4% анлăлатма палăртнă.

Ҫуркунне те ир килчĕ, ҫакă та – тĕрĕслев. Кĕрхи калчасем ҫакна мĕнле тӳсĕҫ? Каҫсерен 10 градус таранах сивĕ, калчасем вара юр айĕнче мар ĕнтĕ – вĕсен управлăхĕ пăшăрхантарать. Эпир кĕтнинчен ытларах пĕтрĕҫ тĕк – хушма резервсем кирлĕ пулаҫҫĕ, ҫакна та шута илетпĕр. Ҫунтармаллисĕрмелли материалсем, им-ҫам, саппас пайсем туянасси, техникăна юсасси графикпа килĕшӳллĕн пыраҫҫĕ.

РФ Правительстви умне тивĕҫлĕ ыйтусем лартатпăр, мĕнле йышăнусем пулĕҫ – калаймастăп-ха. Ҫапах кредитсемпе усă курассин шайĕ пĕлтĕрхинчен кая мар пулмалла. Унсăрăн пурлăх ресурсĕсен ҫителĕклĕхĕ, уй-хирти агротехника мероприятийĕсене вăхăтра пурнăҫлас тĕлĕшпе чăрмавсем тухса тăрĕҫ.

**– Ҫавна май федерацин аграри ведомстви тĕревлессе шанма пулать-и? Сире РФ Ял хуҫалăх министерствипе ĕҫтешлĕх йĕркелейменшĕн ӳпкелекенсем пур. Н.Федоров министр чей ĕҫме те чĕнет-мĕн, эсир каймастăр – мĕншĕн?**

– Паян федераци министерствисенче, ҫав шутра Ял хуҫалăх министерствинче укҫа-тенке регионсене валеҫсе памалли методика пур. Ял хуҫалăхне аталантармалли программăсем, территорисен аталанăвĕн концепцийĕ ĕҫлеҫҫĕ. Ҫавăнпа та министерство ертӳҫи, должноҫри пĕр-пĕр ҫын пĕрре алă пуссах вăл е ку региона пĕр-пĕр проект валли укҫа уйăрса параймасть – унашкал право ҫук. Пĕтĕмпех тĕрлĕ конкурс, йышăнусем урлă иртет.

Пĕлтĕр РФ Ял хуҫалăх министерствинчен эпир 2012 ҫулхинчен те ытларах укҫа илнĕ. РФ Ял хуҫалăх министерствипе хутшăнусем япăх текенсем – сенсаци шыракансем, темăна политика шайĕнче ҫĕклеме ăнтăлакансем. Министрсен Кабинечĕн Председателĕн И.Моторинăн, вице-премьерăн – ял хуҫалăх министрĕн С.Павловăн ыйтусене ҫав шайра сӳтсе явмашкăн полномочи ҫителĕклĕ. Манпа Николай Васильевич хушшинчи хутшăнусене илес тĕк – вĕсем йĕркеллĕ. Хăшĕ-пĕри хутшăнусем ҫивĕч теме пăхать – апла мар.

**– Чей ĕҫме чĕнсен эсир...**

– Чейне кирек ăҫта та ĕҫме пулать, федераци министрĕн хаклă вăхăтне ун-шăн кăна сая яни вырăнсăр.

### ХАЛĂХ, ЧĔЛХЕ ҪИНЧЕН

**– Иртнĕ кĕркунне РФ субъекчĕсен пуҫлăхĕсен нацисен хутшăнăвĕсен сферинчи полномочийĕсене анлăлатасси ҫинчен калакан саккуна йышăнчĕҫ. Ҫавна май кашни пуҫлăхăн ку енĕпе ĕҫлекен ҫум пулмалла. Пирĕн ҫураҫуллă республикăра унашкалли пулĕ-и?**

– Президент ҫак тивĕҫе регионсен пуҫлăхĕсене шанчĕ, мĕншĕн тесен нацисен хутшăнăвĕсемпе ҫыхăннă ларутăру вĕсенчен нумай килет. Чăваш Енре 127 наци ҫыннисем килĕштерсе пурăнаҫҫĕ. Регион пуҫлăхĕ енчен ĕҫ-пуҫа ҫивĕчлетме сăлтав памашкăн ăс нумай кирлĕ мар. Ку – ҫынсен хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕ. Республика Правительствин шайĕнче ку енĕпе уйрăм ҫын кирлĕ мар-тăр. Ҫак ыйтусемшĕн ЧР Пуҫлăхĕн Администрацийĕн ертӳҫи – вице-премьер А.Иванов яваплă. Хăш енĕпе те пулин ĕҫлесе ҫитерейместпĕр пулсан эпир пайăр сĕнӳсене итлеме хатĕр. Ҫак ыйтусемпе яланах курнăҫатпăр. Чăваш наци конгресĕнче улшăнусем пулса иртнине кура – пушшех. Унăн ертӳҫисем улшăнчĕҫ, Н.Угаслов президент ĕҫе яваплăха туйса пурнăҫлать. Пĕр-пĕрне итлĕпĕр, пĕрле ĕҫлĕпĕр.

**– Мĕнле шухăшлатăр: чăваш чĕлхин пурăнмалли тата миҫе ҫул юлчĕ? Шупашкара илес тĕк – вăл Раҫҫейĕн ытти пин-пин хулинчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть, чăвашлăх сĕмĕ ҫук. Калăпăр, мĕншĕн урамсене те пулин чăваш хăлхине ҫывăх Нарспи, Сетнер, Салампи ячĕсене парас мар?**

– Тӳррĕн ыйтрăр, анчах ҫаплах тӳррĕн хуравлама май ҫук пуль. Чăваш чĕлхи пулнă, пур, чăваш халăхĕ пурăннă чух пулĕ те. Тĕрĕс ас тăватăп пулсан юлашки ҫырав кăтартăвĕсем тăрăх эпир халăх йышĕпе Раҫҫейре пиллĕкмĕш вырăнта. Апла тăк малашлăх пур. Чĕлхене, культурăна, ҫырулăха аталантармашкăн федераци бюджечĕ те пулăшать, хамăр бюджетран та уйăратпăр.

Палăртам: Чăваш патшалăх университетĕнче абитуриентсем валли бюджет никĕсĕ ҫинче чĕлхене вĕренме пĕр квота та ҫукчĕ. Халĕ – пулас вĕрентекенсем валли бюджетăн 30 вырăнĕ. Педагогика университетĕнче йывăрлăх ҫук, мĕнле квотăсем пулнă – ҫавсемех юлнă. Мускав та ыйтусем пуррине кура йышĕпе пĕчĕк халăхсемпе тимлĕ ĕҫлеме тăрăшать.

Урамсене илес тĕк – ял-хулара чăвашла ятлисем пур-ҫке. Администрацисен ҫумĕнче ку енĕпе ĕҫлекен комиссисем йĕркеленĕ, унти ятлă-сумлă ҫынсем урамсене, микрорайонсене мĕнле ят парассине татса параҫҫĕ. Эпĕ вĕсен шухăшне шута илме тăрăшатăп. Хăшпĕр ҫĕрте ыйтусем тухса тăрсан – журналистсем, тархасшăн, сĕнĕр.

### ЮТРА ĔҪЛЕКЕНСЕМ ҪИНЧЕН

**– Сочири объектсенчен ĕҫлесе таврăнакан 10 ентеш пĕлтĕр ҫул ҫинче аварире вилнĕччĕ. Ҫакна ăнсăрт уйрăм инкек вырăнне кăна хума та пулать-тĕр, анчах вĕсем тăван тăрăхра ĕҫленĕ тĕк... Патшалăх Канашне янă Ҫырăвăрта эсир арҫыннăн ҫемьепе пĕрле пулмалла терĕр. Ҫакна мĕнле тивĕҫтермелле? Халь вара хăш-пĕр ялта ҫын вилсен пытармашкăн шăтăк чавма та арҫын ҫук теҫҫĕ. Хĕрарăмсем те ĕҫлемешкĕн юта ҫӳреме пуҫларĕҫ.**

– Ыйтăва хăвăр мĕнле хуравланă пулăттăр?

**– Хамăр патра йĕркеллĕ шалуллă ĕҫ вырăнĕсем ытларах кирлĕ...**

– Ҫапла, эпĕ кун пирки Ҫырура каланăччĕ. Ҫемье пуҫĕ юта ĕҫлеме ҫӳрени ҫемьешĕн йывăр, арҫын ачисене воспитани пама хутшăнаймасть, ҫемье шăнăрĕ хавшать. Анчах чăваш йăли ҫапла: арҫын ҫемьене тăрантарма тивĕҫ. Каяҫҫĕ, ĕҫлесе илеҫҫĕ, укҫана ҫемье ырлăхĕшĕн тăкаклаҫҫĕ – ҫакна ырлатăп кăна. Анчах япăххи те пур: укҫапа таврăнаҫҫĕ те – вĕсен тавра "тусĕсем" явăнаҫҫĕ, укҫине ĕҫсе яраҫҫĕ. Кайран вара тусĕсем те, укҫи те ҫук, ҫемйи нушаланать – ҫакă питĕ япăх.

Ютринчен кая мар ĕҫлесе илмелли майсем кунта та пур. Анчах кашниех хăй суйласа илет. Эпир ирĕклĕ ҫĕр-шывра пурăнатпăр, кама та пулин ютра ĕҫленĕшĕн ӳпкелени вырăнсăр. Ĕнентермелле, хавхалантармалла, ҫапла майпа ҫеҫ ҫынсене кунта тытса тăма пулать. Республикăра ĕҫсĕр тесе регистрациленĕ кашни ҫын пуҫне 4 вакансии. Анчах хăшĕсем ĕҫлесшĕн мар, теприсене сывлăхĕ ҫирĕппине пăхмасăрах пурҫук пособи те тивĕҫтерет. Ҫынсен тупăшĕ Чăваш Енре ҫулленех ӳсет, пĕлтĕр ӳсĕм 13% шайĕнче пулнă. Анчах пĕри 40 пин илет – ҫителĕклĕ, теприне ку та тивĕҫтермест. Ҫак ыйтупа вăрах тавлашма пулать, анчах ҫынран хăйĕнчен нумай килет – унăн квалификацийĕнчен, ĕҫ тухăҫлăхĕнчен. Хамăр енчен эпир ҫынсен пĕлĕвне-ăсталăхне ӳстерме, ҫĕнĕрен вĕрентме укҫа уйăратпăр, малашне те ҫаплах тăвăпăр.

Чăваш Ен ҫĕрĕшĕн халăх йышĕ пысăкки пирки те манмалла мар. Яллă вырăнсенче халăхăн 40% пурăнать, ĕҫ вырăнĕсем ҫитмеҫҫĕ. Аграри секторĕнче ҫĕнĕ технологисемпе усă курни ĕҫ вăйне тĕртсе кăларать. Пирĕн предпринимательсен пуҫаруллă класне йĕркелемелле, вĕсем хăйсен вăйĕпе усă курса ҫĕнĕ ĕҫ вырăнĕсем йĕркелеччĕр. Ҫавăнпах Правительство вĕсем валли ятарлă субсидисем уйăрать, ытти мера йышăнать.

### ВЫРĂНТИ ВЛАҪ ҪИНЧЕН

**– Муниципалитетсен ертӳлĕхĕ пирки: район-хула пуҫлăхĕ тата администраци пуҫлăхĕ пулнине ҫынсем ниепле те хăнăхса ҫитеймеҫҫĕ пек. Халь ав муниципалитет йĕркеленĕвĕсен пуҫлăхĕсен суйлавĕ патне тавăнасси пирки каллех калаҫаҫҫĕ – сити-менеджер тата хула пуҫлăхĕ пĕр ҫын пулмалла теҫҫĕ...**

– Ыйтăва сӳтсе яваҫҫĕ. Хальхи схема ним ҫукран ҫуралман. Пĕтĕм халăх суйланă пуҫлăхсем хăйсене ирĕклĕрех туйма пуҫланăччĕ, суйланă тăк – полномочисен вăхăчĕ вĕҫлениччен никам та хăтараймасть. Шанманнине палăртмалли процедура кăткăсчĕ, ҫавна май унашкал тĕслĕх Чăваш Енре кăна мар, Раҫҫейре те пĕрре те пулман. Ҫавăнпа икĕ должноҫ туса хунă. Шупашкарсăр пуҫне республикăри мĕн пур муниципалитетра хула-район пуҫлăхĕсем общество никĕсĕ ҫинче ĕҫлеҫҫĕ. Полномочисене чикĕленĕ.

Хăш схема лайăхрах – сӳтсе явмалла. Паян тивĕҫлĕ саккун проекчĕ Думăра. Регионсене уйрăм полномочисем парасшăн. Идеал шайĕнчи вариант ҫук пуль. Регионсем тĕрлĕ вĕт, хăшĕ меллĕрех – халăх шухăшне шута илсе ҫавăнпа усă курăпăр.

**– Эсир хăвăр хăшĕншĕн?**

– Ҫынсен хăш ыйтупа ăҫтан пулăшу ыйтмаллине пĕлеҫҫĕ. Укҫа-тенке администраци пуҫлăхĕ уйăрать, халăх суйлакан орган ăна полномочисем парать, тĕрĕслесе тăрать. Тĕрĕс схема. Ҫапах тепĕр схемине те хурлама ҫук. Шупашкарта пуҫлăхсен хушшинчи ăнланманлăха туймастăп. Эпĕ хам районти пуҫлăхĕнче ĕҫленĕ – халăх суйланă, ҫав схема та япăх мар. Ҫапах суйланă пуҫлăха ĕҫрен хăтарма йывăр.

**– Хăвăрăн Ҫырăвăрсенчен пĕринче эсир муниципалитет йĕркеленĕвĕсене пысăклатма май пурри пирки калани асра. Анчах ку енĕпе утăмсем пулмарĕҫ. Пуҫару пăчланчĕ-и?**

– Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене 2015 ҫулта суйлатпăр. Эпĕ район центрĕсем пирки каланăччĕ. Сăмахран, Шупашкар районне илер: район тата Кӳкеҫ поселокĕн администрацийĕсем Кӳкеҫре вырнаҫнă. Ял тăрăхĕн администрацине пĕтерсе ăна райадминистраци тытăмĕнчи подразделени пек туса хума пулать. Мĕншĕн тесен ыйтусене пур пĕрех унта тата параҫҫĕ тесе ҫынсем район администрацине каяҫҫĕ. Ку тĕслĕхре ял тăрăхĕн депутачĕсем пулмĕҫ. Ҫак механизма, саккун проектне тишкереҫҫĕ. Волгоградра вырăнти влаҫ представителĕсен канашлăвĕ иртмелле, пирĕн делегатсем те хутшăнĕҫ. Ҫак ыйтусене сӳтсе явĕҫ, сĕнӳсем хатĕрлĕҫ. Ҫапла вара кашни муниципалитет йĕркеленĕвĕ тĕлĕшпе ҫавнашкал йышăну пулмалла, аппарат йышĕ пĕчĕкленĕ. Ял тăрăхĕсене хăйсене чакарасси пирки сăмах пымасть. Райцентрсен ял тăрăхĕн депутачĕсене суйламăпăр – кун пирки иккĕленӳ ҫук.

**– Шупашкарпа Ҫĕнĕ Шупашкара пĕрлештересси вара?**

– Ку ыйтăва та пĕрре кăна мар ҫĕкленĕ. Референдум иртнине ас тăватăр, ҫынсем хăйсен шухăшне пĕлтернĕ. Ҫав шухăш пирĕншĕн – саккун шайĕнче. Каллех калаҫма-тавлашма кирлĕ мар. Ҫĕнĕ хула проекчĕ пурнăҫа кĕнĕ май Шупашкарпа Ҫĕнĕ Шупашкар хăйсен тĕллĕнех пĕрлешĕҫ.

Уйрăм депутатсем ав ҫак икĕ хулана кăна мар, Шупашкар районне те пĕрлештерме сĕнеҫҫĕ. Ҫакăн уссине курмастăп. Пысăклатни мĕн парать? Эпир мĕнешкел пысăк тесе калама-и? Пачах тепĕр майлă – децентрализаци процесĕсем вăй илеҫҫĕ, ҫынсене пĕр ҫĕре пухни вырăнсăр, мĕншĕн тесен ку хушма чăрмавсем ҫуратать. Ҫавăнпа та никама та "хăйсен ирĕкĕпе" пĕрлешме-пысăкланма хистемĕпĕр.

### ЙĂНĂШСЕМПЕ ĂНĂҪУСЕМ ҪИНЧЕН

**– Хăвăрăн республика Пуҫлăхĕн должноҫĕнчи чи пысăк ăнăҫу тесе мĕне хаклатăр? Мĕншĕн те пулин ӳкĕнетĕр-и?**

– Ĕҫре ҫитменлĕх пулатех. Тен, шантарнине туллин пурнăҫламан пуль. Ҫапах тĕпрен илсен тĕрлĕ институт ыйтăмĕсем манăн халăх хушшинчи рейтинг, влаҫа шанасси ҫирĕпленсе пынине кăтартаҫҫĕ. Влаҫри ҫынсене юратсах каймаҫҫĕ, вĕсене критиклеҫҫĕ, ҫав шутра мана та. Апла пулин те республикăра пурăнакансен пысăк йышĕ пирĕн ĕҫе ырлани – курăмлă кăтарту. Республикăри обществăпа политика тăнăҫлăхне упраса хăварма пултартăмăр, хăрушсăрлăха ҫирĕплетрĕмĕр, укҫа-тенкĕпе ҫыхăннă тĕрлĕ вăрттăн схемăсене пултарнă таран кăклатпăр – ҫакна республика, муниципалитетсен бюджечĕсен тупăшĕ ӳссе пыни те ҫирĕплетет. Предпринимательлĕхе хĕстерместпĕр. Ҫĕр лаптăкĕсем тĕлĕшпе йĕрке туни те пысăк пĕлтерĕшлĕ – унта халь ӳкерчĕк уҫăмлă. Администраци пуҫлăхĕсенчен пĕри те хăй тĕллĕн алă пусса тусне е тăванне лаптăк параймасть – пĕтĕмпех конкурс никĕсĕ ҫинче иртет.

Эпĕ должноҫа килнĕ чух пир-авăр комбиначĕ, чăлхапа трикотаж фабрики тĕлĕшпе ҫивĕч ыйтусем тăратчĕҫ, суртйĕр тăвакан комбинатра панкрутлăх процедуричĕ, улталаннă пайăҫсем нумайччĕ. Ҫак ҫулсенче ку ыйтусене йĕркелеме пултартăмăр. Пирĕн паянхи тĕллев – пĕлтерĕшлĕ предприятисене панкрутлăх процедуринчен упрасси. Мĕншĕн тесен ҫакă ĕҫ коллективĕсенче ҫивĕчлĕх ҫуратать. Юлашки ҫулсенче пысăк пĕр предприятире те конкурс производстви пуҫарман.

**– Тавах интереслĕ те усă калаҫушăн.**

**Николай КОНОВАЛОВ.**

# Пĕр урипе акара, тепринпе вырмара

**"Çурхи акана ирттерсе ярăпăр-ха. Пĕр-икĕ эрнене чăтма пулать. Акса ÿстернине пухса илесси пуçа хыçтарать", – тетчĕ ертÿçĕре ĕçлекен пĕлĕшĕм. Тĕрĕсех каланăн туйăнать, анчах кашни ĕççи – яваплă, шанчăка тÿрре кăлармалли тапхăр. Кăçалхи çур акире кама ытларах шанма пулать тесен Сĕнтĕрвăрри районĕнче вăрах шухăшламаççĕ. Ăнăçлă ĕçлекен, паха тыр-пул туса илекен хуçалăх кунта йышлă мар.**

Михаил Тагеев фермер юхăннă хуçалăха вирхĕнсе кĕчĕ те урлă выртана тăрăх çавăрса хисепе тивĕçрĕ. Хăйне май кăсăклă ертÿçĕ вăл. Çав тери нумай пĕлет, чăннине тÿртен калать, лăпкă пулленĕ хушăрах "патака" шарт хуçма пултарать. Шутхисеп енчен пуçĕ арман пек авăрать, çавăнпа бухгалтерсемпе экономистсем унăн умĕнче ытлашши шарламаççĕ. Мĕнле те пулин ыйтăва йăнăш хуравласан – пĕтрĕ пуç, тухăмрах намăс куратăн.

Эпĕ те акă кăнтăрлахи апат çинĕ вăхăтра чухламасăр хуçалăх çурхи акана мĕнле хатĕрленни çинчен ыйтусем пама тытăнтăм та сăмах илтрĕм – "сĕтел хушшинче апатланаççĕ, ĕç çинчен калаçмаççĕ". Тĕрĕссишĕн çынна епле кÿренĕн? Тепĕр чухне хивререх хурав илтсен те çиллене местĕн. Кăмăла çавăрса яма пултарать.

Фермер хуçалăхĕ йĕркелесен темиçе çултан Михаил Леонидович çемье фермисене аталантарма паракан патшалăх грантне тивĕçрĕ. Ĕçтешĕ пысăк укçа илнĕшĕн хăшĕ-пĕри ăмсанчĕ те. Пысăк укçашăн вара яваплăх та ÿсет. Чаплă фермăна ăратлă ĕнесем туянма тата темиçе миллионлăх кредит парăмне кĕчĕ. Ăна тавăрас тесен каллех укçа кусĕнчен пăхмалла. Чунĕ тăвăлса çитсен патшалăх хăйĕн пулăшăвне (кредитăн процент ставкисене субсидилессипе çыхăннă) вăхăтра парайманнине аса илет. Парăмĕ самаях пусăрăннă-мĕн. "Паянах пăрахса кайма хатĕр" текен сăмахсене пĕр Михаил Тагеев фермертан кăна илтместĕн. Акă çапла каларĕ çеç ертÿçĕ, тепĕр пилĕк минутранах кĕсье телефонĕпе Вăрмар районĕнчи юлташĕпе çыхăнчĕ те комбайн туянма кăмăл тунине пĕлтерчĕ. "Эрне кун иккĕшне пăхма пыратпăр", – терĕ. Çапла вĕсем, пысăк ĕç тума пултаракансем: пĕр урипе акара, теприпе вырмара.



Елена Васильевăпа Татьяна Матюшина бухгалтерсем

Инçене пăхакан ертÿçĕн хуçалăхĕ çур акине тухма хатĕр. Удобренине республикăн апат-çимĕç фондĕнчен турттараççĕ. Вăрлăх çителĕклĕ, элита шайрине те туяннă. Пĕрчĕллĕ çурхи культурăсене планпа пине яхăн гектар акма палăртнă. Унсăр пусне 130 гектар çинче нумай çул ÿсекен курăк çитĕнтересшĕн. Ферма выльăхне çÿретмелли лаптăк пулĕ вăл. 400 гектар ытла йышăннă кĕр тырри те аван хĕл каçнă темелле. Çавăнпа фермер "паянах пăрахса кайма хатĕр" тени ниепле те тÿрре тухмасть. Тепĕр тесен – патшалăх та ирĕк памĕ, çемье фермине аталантарма илнĕ грантшăн пилĕк çул ĕçлесе татмалла.



Владимир Желудков механизатор

# Ырлама та, упрама та пĕлмелле

Ферма ĕçченĕсем те хисеплеççĕ фермера. "Хăш енĕпе ырлатăр-ха?" – тесен Нина Егорова доярка "Хресчен сасси" хаçата асăнчĕ. "Çав тери юратса вулатпăр. Упăшка хаçат-журнал салатакан почтальона ачана кĕтнĕ пек кĕтет. Хам та пĕрре вуласа тухнипе çырлахмастăп, тем вăхăтран каллех алла илетĕп" – тет вăл. Тĕрлĕ хаçата ĕçченсене фермер кашни çул çырăнса парать.

Тепĕр висĕ кунран чăваш эстрада çăлтăрĕсен концертне каясси çинчен те пĕлтерчĕç. Ĕçленипе кăна мар, культурăллă та канччăр тет ĕнтĕ ертÿçĕ.

Ĕне сăвакансене вăл ĕçе ятарласа уйрăм машинăпа турттарать, леçсе ярать. Ирĕксĕртен çапла тума тивнĕ. Ĕç дисциплинине пăхăнса, яваплăха туйса ĕçлекене тăван ял тăрăхĕнче шыраса хăшкăлнă. Çавăнпа инçетрисене илĕртнĕ. Куç ÿкерес марччĕ, вĕсем хăйсен умĕн ĕçленисем пек тарăхтармаççĕ, тăрăшса вăй хураççĕ. Хăтлă фермăна лекнĕшĕн савăнаççĕ. Кунта ĕçлеме те, ывăннă хыççăн канма та, çăвăнса тасалма та майсем пур. Витре е бидон çĕклесе ывăнмастăн, сĕт пăрăх тăрăх пырать.

Ферма коллективне (вăл 220 пуç выльăха пăхать) Галина Лапина ертсе пырать. Ун умĕн тăрăшнă çамрăк хĕрарăм шăпах эпир çитнĕ кун ывăл çуратнине пĕлтерчĕç. Галина Ивановнăна шанать фермер, ара лешĕ хăй вăхăтĕнче кÿршĕ хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх ферминче вăй хунă. Паянхи кун вăл пенсире. Анчах унччен, тăван хуçалăхĕ салансан, хулара ĕç шыраса пайтах нуша курнă.

Ĕçлеме пултаракан ертÿçĕне упрама, йывăр вăхăтра сыхласа хăварма пĕлмелле çав. Ют шухăшлисене пула лава йĕркеллĕ тытса пынă ертÿçĕн тухса кайма тивнĕ те хуçалăх текех ураланайман. Ялта пурăнакансем ĕçсĕр юлнă, вĕсен вăйĕпе тунă пурлăх арканнă, саланнă е усламçăсен аллине лекнĕ.



Ферма заведующийĕ Галина Лапина



Александр Кривов слесарь тата выльăх пăхакан

# Тăрăшакана пулăшмалла

Владимир Желудков механизатор пеккисем пулсан шанчăк çухалмасть. Яла килсе тĕплениччен Киров хулинче ĕçлесе пурăннă. Таврăнсан çар çыннин тумне хывнă та хура ĕçре килĕшÿллине тăханнă. Вунă çул ытла механизаторта тăрăшса ял хуçалăх çынни пулса тăнă. Лайăххи хăй пеккине инçетренех курать мар-и? Тагеев хуçалăхĕнче ĕçлеме тытăннă вăй питти çамрăк. Çемьеллĕ, хальлĕхе мăшăрĕн ашшĕ-амăшĕ патĕнче пурăнаççĕ. Ĕçе иккĕшĕ те урăх ял хутлăхĕнчен (Çĕнĕ Куснар ялĕнчен), темиçе çухрăмран çÿреççĕ. Хăй ĕçлекен Октябрьскинче Желудковсен çемйи уйрăм çурт лартасшăн, çĕр те илнĕ. Ялăн социаллă пурнăçне аталантарма пулăшакан патшалăх программипе усă курасшăн, анчах ĕçе ниепле те вĕçне çитерейместĕç. Программăна лекме висĕ çул кирлĕ хутсем пуçтараççĕ, патне çитсен хăшĕ те пулин юрăхсăр. Вырăнти муниципалитет администрацийĕсенче ларакансен шайĕ çав тери пĕчĕк-ши?

Ыттисене пăхсан Желудковсен кÿренме сăлтав пур. Тепри патшалăхăн тавăрса памалла мар укçине илессишĕн кăна ял хуçалăх предприятийĕнче вăхăтлăх ĕçленĕ пек кăтартать. Укçана алла илнĕ хыççăн хÿрине те курса юлаймастăн. Нумай çул тăрăшса вăй хуракан вара специалистсен тимсĕрлĕхне пула унпа усă курайимасть. Михаил Тагеев фермера та çак ларутăру пăшăрхантарать, кăçал вăл механизатора хÿтĕлесе район администрацийĕн пуçлăхĕпе хăй калаçасшăн.

# Хуçине кура çамрăкĕсем

Паян Михаил Тагеев фермер патĕнче бухгалтерта тăрăшакан Елена Васильева та урăх хуçалăхра вăй хунă. Финанс тытăмĕнче 27 çул тăрăшаканскер фермер хуçалăхĕнчи ĕçе пĕлсе тытса пырать. Унран Татьяна Матюшова бухгалтер ăсталăх пухать. Ĕçленĕ хушăрах аслă шкул пĕтернĕ. Икĕ çул каялла Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнĕ. Кунашкаллисен йышне тепĕр хут лекме вăхăт пур-ха, çамрăк. Фермер патĕнче ĕçлекен Артемий Каяхов механизатор, ав, икĕ хутчен илме пултарнă çак стипендие.

Ертÿçĕ хăйĕн патне пултарулă та пуçарулă çамрăксене явăçтарса хăварма пултарсан ыранхи кун ăмăр та тĕксĕм килмĕ.



Артемий Каяхов механизатор

Ирина НИКИТИНА.

# Янăм



Етĕрне районĕнчи Янăм çулĕпе Шупашкартан аслăрах. Ун пек ватă ял таврара та çук. Тен, хăшĕ-пĕрин аваллăхĕ хут çине çырăнса юлман пулĕ. Ку илемлĕ вырăна пăлхарсем тахçанах килсе тĕпленни вара паллă.

Ялăн хальхи историне çыракансем – унта ĕçлесе пурăнакансем. Урамра Антонина Васильева библиотекаре тĕл пултăмăр.

– Пăхăр-ха, епле капăр та хӳхĕм çуртсем çĕклеççĕ пирĕн çынсем, – тет вăл кăмăллăн сывлăх сунса. – Ĕлĕкрен тĕрлĕ ал ĕç ăстисем хăйсен япалисемпе таврана тĕлĕнтернĕ: катка-пичке ăсталанă, çăпата тунă, тĕрĕ тĕрлессипе вĕсене çитекенни пулман. Çав пултарулăх ăруран ăрăва куçнă. Пӳрте кĕрсе курмасăр ан кайăр. Туй çи-пуçне кăтартăпăр, хамăр алăпа тĕрленĕ ытти тум та тыткăнлать.

Янăм кун-çулне сăнласа пуян материал пухнисен шутĕнче – паллă фотохудожник Вячеслав Романов. Çакăнта çут тĕнчене килнĕскер кунти ытарайми кĕтессенче пин-пин ӳкерчĕк тунă, архивĕ çав тери пуян. Юрий Жуков композитор вара чуна хускатакан юрă-кĕвĕ çырнă.

Иртнĕ çул халăх ялăн 545 çулхи юбилейне паллă турĕ.



Алексей Петров



Антонина Васильева библиотекарь



Лидия Захарова



Алексей Ятрушев



Антонина Васильева, Елизавета Орлова, Лидия Сазонова, Светлана Митрофанова, Зоя Жукова пушă вăхăта усăллă ирттереççĕ



*С. ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем.*

# Электрон çырăнтару çинчен – тĕплĕн

"Хыпара" тата "Çамрăксен хаçатне" электрон майпа çырăнсан хут çине пичетленĕ хаçатсем вырăнне сирĕн патăра вĕсен электрон версийĕ пырса тăрĕ. Кĕскен – пичет кăларăмĕ тухнă кун хăвăрăн электрон почтăра кăларăмăн виртуаллă версине PDF форматра уçса вулаятăр. Сирĕн компьютерăн, ноутбукăн, нетбукăн, планшетăн е тата смартфонăн экранĕнче хут çинче пичетленнĕ хаçатах курăнĕ. Вăл текст тĕлĕшĕнчен те, калăплав енĕпе те почтальон валеçекеннинчен уйрăлса тăмасть.

***"Хыпарпа" "Çамрăксен хаçатне" электрон майпа çырăнмашкăн хăвăршăн меллĕ меслете суйлăр:***

1. Пирĕн сайтра - hypar.ru - "çырăнтару" пайра заявка хăварма пултаратăр. Пирĕн ĕçченсем сирĕнпе çыхăнĕç. Укçа тӳлемелли счета факспа е электрон почтăпа ярса парĕç. Ăна кирек мĕнле банкра та тӳлеме пулать, квитанци копине редакцие 28-83-70 факспа е hypar@mail.ru электрон почтăпа ярса пама çеç ан манăр.

2. Редакцие килсе çырăнма май пур. Адресĕ: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм.

3. Хаçатăн электрон версине банк урлă çырăнса редакцие квитанци копине ярса пама пулать. Банк реквизичĕсем: АУ "Издательский дом "Хыпар" Мининформполитики Чувашии, р/с 40603810200000013969 в АКБ "Чувашкредитпромбанк" ОАО г. Чебоксары, БИК 049706725, к/с 30101810200000000725, ИНН 2130075064, КПП 213001001.

4. Яндекс-укçа (Яндекс-деньги) тӳлев тытăмĕ урлă. Электрон енчĕк номерĕ: 410012154010810.

***Ан манăр: хаçатăн электрон версине сирĕн патăра ярса памашкăн хăвăрăн электрон почта адресне парăр!***

**Электрон çырăнтару мĕншĕн меллĕрех?**

• **Укçăра перекетлетĕр.** Электрон çырăнтару хакĕ почта урлă илсе тăнинчен 8 хут йӳнĕрех. **"Хыпар" хаçата 2014 çулăн II çурринче** почтальонран илсе тăрас тесен 744 тенкĕ те 12 пус кăларса хума тивет. Электрон версине çур çуллăха çырăнма – 90 тенкĕ кăна. 654 тенкĕ перекетлесе эсир Чăваш радиовне итлеме приемник туянма пултаратăр. **"Çамрăксен хаçатне"** почта урлă илсе тăма 375 тенкĕ кирлĕ. Электрон версине эрне кунсерен çур çул вулама – 50 тенкĕ. Перекет – 325 тенкĕ! Ку укçапа кил хуçи – кĕпе, мăшăрĕ çӳç типĕтмелли фен туянма пултарать. Ачана парне тăвас тесен те нумай шухăшламалла мар – чаплă энциклопеди илеетĕр.

• **Почтальона кĕтсе хăшкăлмăр.** Мĕн пытармалли: чылай тăрăхра хаçата е каçхине, е тепĕр кунхине çеç пырса параççĕ. Электрон верси вара хаçат тухнă кун ир-ирех сирĕн электрон почтăра пулĕ.

• **Хаçата электрон майпа тĕнчен кирек хăш кĕтесĕнче те илсе тăма пулать.** Халĕ çĕнĕ номер аякри йăхташăмăрсем патне пĕр эрнерен кăна çитет. Электрон верси вара – çав кунах.

• Эсир тинĕс хĕрринче хĕвелпе пиçĕхетĕр-и, командировкăна каятăр-и, çул çӳреве тухатăр-и?.. **Хаçатăн электрон версине кирек ăçта та вулама пулать.**

• **Килĕшнĕ статьясене** хут çинчен вулас тесен ăна принтерпа хăвăра кирлĕ чухлĕ пичетлеме пултаратăр.

•**Хаçат номерĕсем нихăçан та çухалмĕç** – хăвăра килĕшнĕ интервью-очерка темĕн чухлĕ вăхăт иртсен те электрон почтăна уçса тупса вулама меллĕ.

**Электрон çырăнтарăвăн çитменлĕхĕ пур-и?**

Вăл – пĕртен пĕрре: хаçат хутне чăштăртаттарма май çук.

**"Хыпарпа" "Çамрăксен хаçатне" электрон майпа çырăнас тетĕр-и? Эппин, виртуаллă тĕнчере сире хапăл туса кĕтетпĕр!**

**Раççейре, тĕнчере...**

# Украина: ниçталлисĕр таçталла



Раççей кӳрши ăçта çитсе тухнине пурте куратпăр, малашлăхĕ вара питĕ тĕттеллĕ. Унччен Союз тытăмне кĕнĕ республика (тӳррипе каласан экономика аталанăвĕпе унашкал вăйлă регион пулман СССРта) чăнкă çыран умне 20 çул утрĕ. Ертӳçисене перчетке пек улăштарчĕç, нихăшĕн те ытти çĕршывпа çыхăну йĕркелемелли, вырăнти промышленноçа ĕçлеттерсе ямалли усăмлă программа пулман. Шушкевич, Кравчук, Кучма, Ющенко, Янукович... Патша вырăнне халь кам ларассине татса калама хĕн, анчах çав пилĕк пуçлăха пĕр пеклетекен ен пур. Вĕсем Раççейпе туслă пурăнасси çинчен пĕр вĕçĕм пакăлтатнă, анчах шухăшĕмĕчĕпе Анăçа ăнтăлнă. Пĕтĕм ырлăх-пурлăх унтан килмелле-мĕн. Кам кĕтет вĕсене Европăра? Чăн та, пĕрисен тату пурнăçне ăмсанмалла, теприсем пуяннисен çăварĕнчен пăхаççĕçке. Ыйткалакана тухнă пысăк йышлă патшалăх паян никама та кирлĕ мар. Тепĕртакран çак чăнлăха ăнланса илĕç те пуçа ярса тытĕç: мĕн туса хутăмăр-ши?

Украин халăхĕн мĕскĕн шăпи пире те хытă кулянтарать. Ара, ĕмĕрĕпе тус-тăван пек пурăннă вĕт-ха. Ертӳçĕ енчен ăнмарĕ вĕсене. Пытармăпăр, патшалăх тилхепине Янукович тытни шанăçа ӳстернĕччĕ. Шел, вăл та пулин çил хăвана тухасса, çеçен хирте тусан вĕçтерсе çӳрессе кам шухăшланă. Унченхи элтеперсен "чирĕ" куçрĕ-ши.

Йĕркипе каяр-ха. Хăй тĕллĕнлĕх çинчен пĕлтерсе Шушкевича влаçран пăрчĕç. Тӳпемре Кравчук çăлтăрĕ çуталчĕ. Союза аркатнинче ун тӳпи калама çук пысăккине чылайăшĕ пĕлмест-тĕр. Ельцин хăй вăхăтĕнче енчен-енне сулăннине унран чеерех политиксем хăйсемшĕн усă курса юлчĕç. Телекамера умне тухса çуллă сăмах калама юратакан Кравчук никама пăхăнман патшалăх тенине хăйне май ăнланнă: унченхи республикăсемпе коопераци çыхăнăвĕсене татас, авиаци, машинăсемпе карапсем тăвакан отраслсем кирлĕ мар, вĕсен оборудованине тимĕр-тăмăра ăсатас...

Пурнăç хĕсĕнсе çитсен кирек камшăн та сасăлама хатĕр айван халăх. Экономикăна чухламан Кравчук вырăнне Кучма килчĕ. Производствăра ĕçлесе курнăскер, хуçалăх çынни. Вăл ял хуçалăхне мĕншĕн хытă курайманнине ниепле те ăнлантарса параймăп. Ача чухне тăраниччен çăкăр çимен-ши, 30-мĕш çулсенче Украина кăна мар, пĕтĕм Союз выçăллă-туталлă тертленнĕ. Кучма пирĕн йăнăшсенех турĕ: колхоз-совхоза сапаласа ячĕç, сутнă çĕрĕсене акса-тăвакан çук, техники çитмест. Арендатор çĕр пулăхлăхĕшĕн тăрăшать-и? Уншăн пулсан паян услам тумалла та ыран теприне ярăнтармалла. Ытти çулсенче хăйне тăрантармалăх апат-çимĕç туса илнĕ патшалăх импорт çине куçни хуçалăх пĕтсе пынине систерекен япала.

Ющенко. Ку çынна тутăхнă пăтапа танлаштараççĕ. Ăна пĕренене çапса кĕртнĕçем тутăхĕ ӳпкене кĕрет, пăти хуçăлса аякка вăркăнать, çитменнине тата мăлатукпа пӳрнене лектеретĕн. Ай, ыратать-çке. Паллă националиста урăх нимĕнле хаклав та кирлĕ мар, ахăртнех. Малтан унăн пĕрремĕш утăмĕсемпе хăпартланнисем (вăрăм çивĕтлĕ Юлия Тимошенко та ăна турă вырăнне хунă) пурте тарса пĕтрĕç.

Янукович ниçталлисĕр таçталла çапкаланни те халăха тĕпсĕр шурлăха илсе çитерчĕ. Виктор Федорович кӳлепипе мăнаçлă, çирĕп çын евĕр туйăннать. Пĕрре пăхни ултавлă иккен. Пуçтахсене çийĕнчех пӳлнĕ пулсан çаплах иртĕхмĕччĕç.

**Александр СОЛДАТСКИЙ.**



Путино

# Путин ялĕн чĕрĕлĕвĕ

**Владимир Путин 14 çул каялла Президента суйланнă тапхăрта французсен чи сумлă изданийĕн – "Ле Монде" хаçат корреспонденчĕ Петр Смоляр Урал тăвĕсенче пытаннă Путино ялне çитсе килнĕ, çул çӳрев очеркĕ пичетленĕ.**

Унти хăш-пĕр самантпа вулакансене паллаштарас терĕмĕр:

"Ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман ял. Кунта та юрăхлă ĕç çуккишĕн нăйкăшаççĕ, урампа иртнĕ чух виле ӳсĕррисем хирĕç пулчĕç. Арçынсем пулăран тавранăççĕ-мĕн. Лайăх çунă...

Çывăххах – сĕм вăрман. Кăмпа, çырла татма ан ӳркен. Ялти шыв пăрăхĕсем тахçанах çĕрнĕ, улăштаракан çук. Çырмаран витре çĕклесе утакан кинемее питĕ шеллес килчĕ. Тахçан акнă уйсене мăян пуснă. Хресченсен çурчĕсем çĕрĕшсе тайăлнă, çамрăксем çак упа шăтăкĕнчен тарни вуçех тĕлĕнтермерĕ. Цивилизаци аталанăвĕ ку ялтан аякра иртнĕ пулас".

Журналист Сочири Олимпиада умĕн çав ял çинчен аса илнĕ те унта тепре çаврăнса çитнĕ. Акă еплерех сăнлать паянхи Путино пурнăçне:

"Вун тăватă çул каялла тĕл пулса калаçнă кунти çынна – Самвел Кирокосяна (ячĕпе хушамачĕ вырăсла янăрамасть пулин те вырăса тухнă эрмене таврара пурте хисеплеççĕ) курах кайрăм. Чăннипех маттур çын. Арканнă совхоз ванчăкĕсене пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарнă, хăй тĕллĕн предприяти уçнă. Тыррине те туса илеççĕ, ăна хăйсемех авăртса сутаççĕ. Пысăк ялта пурăнакан пĕр пин çынран 200-ĕшĕ ун патĕнче тăрăшать. Эппин шалу çемьене тăрантарма çиткелет. Юлашки çулсенче кирпĕчрен капмар çуртсем çĕкленĕ, хăшĕпĕрин çинче спутник антеннин çаврашки...

Чи пахи – халăх шухăш-кăмăлĕ улшăнни, çынсем ыррине ĕненни. Ĕç йĕркине пăсаканни сайра, эрехпе туслисене пуçран шăлмаççĕ. Канмалли кунсенче кăшт хĕрĕнкĕреххисене асăрхатăн, çапах ĕçсе супнă çынсем мар вĕсем. Ĕç вырăнне питĕ хаклаççĕ.

Хуçалăха тытса пыма пĕлекен ертӳçĕ тĕрлĕ дипломсемпе наградăсем кăтартрĕ. Унтан пирĕн калаçăва ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Владимир Овчинников хутшăнчĕ.

– Ача çураласси вилекенсенчен ытларах, – тет вăл. – Йыш ӳсĕмне кĕни виççĕмĕш çул. Унччен тĕрлĕ спирт хутăшĕ лĕрккесе леш тĕнчене ăсанатчĕç, халĕ унашкалли сайра хутра. Цивилизаци тетĕр-и? Кашни килте тенĕ пек Интернет. Ял пĕтмесен Раççей пурăнать. Нимĕнле Майдан та, революци та кирлĕ мар пире. Асаттесем тĕрлĕ тытăçусенче нумай тăкăннă, çитет".

**Н. СТЕПАШИН.**

# Кивçенрен тухăпăр-ши?

**Хресченсен банксен умĕнчи парăмĕ вĕсем çулталăкра туса илекен продукци калăпăшĕнчен те пысăкрах**

Кивçене кĕме ансат та тухма хĕн. Центробанк пĕлтернĕ тăрăх – 2013 çулта ял хуçалăх тата вăрман хуçалăх предприятийĕсем банксене тӳлесе татман укça виçи 1,41 трлн тенкĕпе танлашнă. Экономикăн ытти отраслĕсемпе танлаштарсан кредит портфелĕнче аграрисен тӳпи 1,9 процент кăна, çапах хресченсен процент ставки пысăкрахмĕн. Паян АПКри вăтам кредита 12 процентпа параççĕ. Хăватлă агрохолдингсем ("Русагро", "Черкизово" тата ыттисем) кредит илĕшĕвĕсене 8-10,85 процентпа тума пултарнă.

Патшалăх выльăх-чĕрлĕх секторне аталантармалли инвестици проекчĕсене субсиди парса саплаштарнине пĕлетĕр. Çавăнпа "Черкизово" холдинг банка 3,08 процент çеç тӳлет. Кивçенпе вăхăтра татăлнине кура банкирсем унашкал клиентсене яланах хапăл.

Шел пулин те, кредит тытăмĕнчи пĕтĕмĕшле лару-тăру чаплах мар. 2009 çулта вăхăтра тӳлесе татман укça хисепĕ 2,4 процент пулнă, 2012 çул вĕçленнĕ тĕле вăл 7,6 процента çити ӳснĕ. Ытти отраслсен кунашкал парăм самай пĕчĕкрех. Кунта тыр-пул акса тăвасси çут çанталăк улшăнăвĕнчен килнине шута илмелле. 2012 çулти Атăлçи тăрăхĕнчи типĕ çу тата Инçет Хĕвел тухăçĕнчи çĕрсене шыв илни – хресчене пысăк çухату кӳнĕ тĕслĕх пайтах. Нумай хуçалăх панкрута тухас патнех çитнĕ, вĕсенчен укça кĕтсе илеймĕн. Укça тавранмасса сиснĕ коммерци банкĕсем кивçен пама хирĕç, Госбанка кайăр тесе ăсатаççĕ. Укça-тенкĕ çаврăмĕнчи пĕчĕк тытăмсем хуçалăхсемпе вуçех ĕçлеме пăрахнă. Ытти çулсенче кивçенпе вăхăтра татăлнă, анчах халĕ ĕç-пуçа япăхтарса янă агрофирмăсем темиçе банкпа кредит килĕшĕвĕсем тунă, нихăшĕнпе те уççи-хуппи çук. Йывăр тиеве пуç çинчен сирес тесе предприятисем хăйсен пурлăхне сутма пуçларĕç.

Акă "Настюша" агроушкăн вунă элеватор хакĕн пĕр пайне Россельхозбанка сутрĕ. Асăннă финанс учрежденийĕ кунсăр пуçне аш-какай кăларакан "Парнас-М" фирма тата темиçе сахăр завочĕн пурлăхĕн хуçи пулса тăчĕ.

Россельхозбанк тенĕрен, ун шăпине пĕлтĕртенпех сӳтсе яваççĕ. Влаçрисем унран икĕ тытăм туса хурасшăн: универсаллă банк тата ял хуçалăх аталанăвĕн институчĕ. 2009-2012 çулсенче патшалăх ун тӳпине 106 млрд тенкĕ хывнă, анчах кăтартусем лайăхланман. Кредит уйăрас умĕн хуçалăхсен экономика çирĕплĕхне тĕплĕ тишкермеççĕ, çавна пула тавăрман укça хисепĕ чакни сисĕнмест. Малашнехи çухатусенчен сыхланас тесен банкра 150 млрд тенкĕлĕх резерв фондне туса хума сĕннĕ. 2013 çул пуçланнă тĕле вăхăтра тӳлемен укça 93,3 млрд тенкĕрен иртнĕ.

Ытти пысăк банксем те халь агропромышленноç комплексне укça пама васкаманнине ăнланмалла. Сăмахран, "Альфа-банк" ӳсен-тăранпа кăна ĕçлекенсемпе çыхăну тытмасть: тырă ăнса пулман çул укça çухаласран шикленеççĕ. ВТБ хăйĕн шанчăклă клиенчĕсене пулăшма хатĕр, кивçенрен хăтăлайманнисемшĕн алăк хупă.

Сезона кура çеç тупăш илекен хуçалăхсен кама кайса пуç çапмалла? Акса тунă çимĕçе хăвăр тирпейлесе сутăр, вара тин ссуда илессипе чăрмав сиксе тухмĕ. Анчах пирĕн хуçалăхсенчен чылайăшĕн тĕп пуянлăха – çĕре е выльăхчĕрлĕхе саклата хунисĕр пуçне урăх нимĕн те çук-çке...

**Дарья БОРИСОВА.**

Кăларăма Вячеслав ГРИГОРЬЕВ хатĕрленĕ.

ÇЫРĂНТАРУ – 2014

ХРЕСЧЕН САССИ

Тăлăх çынпа пĕр
«Хресчен сассисĕр» кил.
Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕм,
Васка, çырăнса ил!

## Ĕмĕр сакки

# Чун хавалне çухатман

**Тӳсĕмлĕ пулнă аслă ăру. Самана кутăн-пуçăн лăсканине пăхмасăрах чун хавалне çухатман вĕсем. Йывăра йывăр выраннe хуман, темле лару-тăрура та çынлăхпа шанчăка çухатман хĕрарăмпа, тăхăр теçеткерен каçнă Маюк аппапа паллаштарас килет вулакана. Йĕркипе каяр-ха.**



### Пуртан – çук

Вăрнар районĕнчи Кушар Юнтапа ялĕнче Петĕрпе Укçине Карповсен 11 ача çуралать. Ашшĕ-амăшĕн ачисене ыталаса ларма вăхăт пулман. Пысăкраххи пĕчĕкреххине пăхнă. Пысăк çемьене тăрантармалла. Çĕрĕн-кунĕн ĕçлеççĕ Карповсем. Майĕпен йывăç çурт та лартаççĕ, хур-кăвакал, ĕне, лаша усраççĕ. Вĕсем ураланма пуçланă вăхăт коллективизаци тапхăрĕпе тӳр килет. Пур çĕрте те «Кулак – класс тăшманĕ!» лозунг янăранă.

Унччен чухăн пурăннă наянсем тулăх пурнăç тума пултарнă хресчене тавăрма пуçлаççĕ. 1937 çулта Маюк ашшĕне, Петр Карповича, тĕрмене тытса каяççĕ. Мĕн пур пурлăхне куштансем намăса пĕлмесĕр хăйсен хушшинче валеçме пуçлаççĕ. Йывăç çурта сӳтсе ял вĕçне кайса лартаççĕ, правлени йышăнăвĕ туса хураççĕ. Выльăх-чĕрлĕхĕ, савăт-сапи таран пуçтарса тухса каяççĕ. Пĕтĕм пурлăх-мулне çемье хăй вăйĕпе ĕçлесе тунине шута та хумаççĕ. Мунчапа, улăм тӳшекпе тата хăй йĕри-тавра пуçтарăннă ачи-пăчипе тăрса юлать Ксения Павловна. «Аттене çухатнипе чи йывăр тапхăр пуçланчĕ. Эпир ăна урăх кураймарăмăр. Анне хуйхăпа чирлесе кайрĕ. Выçăллă-тутăллă пурăннă. Сĕлĕ арпипе, çĕр улми пашалăвĕпе тăранкаланă, сертевĕлтрен яшки пĕçернĕ. Кантăр, йĕтĕн вăррине 15 çухрăмри Нурăс пасарне кайса çăнăхпа улăштарсан çеç икерчĕ çисе кураттăмăр», – ачалăхпа вăхăтсăр сыв пуллашнă çулсене аса илет Мария Петровна.

### Вăрçă ахрăмĕ

Çиччĕмĕш класа лайăх паллăсемпе вĕренсе пĕтернĕ Маюка правлени ларăвĕ Нурăсри медсестрасен курсне вĕренме ярать. Каç пулсан çамрăксем кĕнчеле йăтса ал ĕç тума пĕр-пĕрин патне çӳренĕ. «Пĕррехинче çапла юнашар чипер каччă килсе ларчĕ. Тумтирĕм питĕ начар пулнипе вăтанса, хĕрелсе кайрăм. Çавăн хыççăн нумай вăхăт улаха кайма иментĕм», – хĕр çулĕсене аса илет Маюк аппа.

Пурнăçа йăлт çĕнĕрен, ним çукран тума тивет вĕсен. Виçĕ çул хушши Маюк ача сачĕн ертӳçи пулса ĕçлет. Ура çине тăма кăна пуçлаççĕ – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланать. Çирĕп кĕлеткеллĕ ултă хĕре Калинин облаçне торф кăларма яраççĕ. Вăл шутра Маюка та. Çывăхрах бомбăсем ӳксе çурăлнинчен пуçласа тем те пĕр тӳснĕ хыççăн хĕрсем тарма шухăшлаççĕ. Хăйсене çар трибуналĕ умне тăратасран хăрамасăрах Маюк икĕ тантăшĕпе пĕрле Атăл тăрăх пăрахутпа Чăваш çĕрне çитет. «Çул çинче махоркăна çăкăрпа ылмаштартăмăр. Пăрахут çинче ĕçлекенсене Шупашкара çитиччен лартса килме ӳкĕтлерĕмĕр. Тĕрĕслев вăхăтĕнче «мăшăрĕсем» теме хушрĕç», – малалла тăсăлать калаçу.

1941 çулхи кĕркунне пурне те Сăр юхан шывĕ хĕррипе окопсем тата тăшман танкĕсене тытса чарма канавсем чавма яраççĕ. «Чавма питĕ йывăрччĕ. Лум-кĕреçе авăнатчĕ, хуçăлатчĕ. Тумтир ăшă пулман: пир йĕмпе каптăрмаллă çăпата кăна. Айлăмра кăвайт çунтаратчĕç. Пуçа кăвайт енне туса çĕр каçаттăмăр, хамăр ая тата çиеле чăрăш лăсси хураттăмăр. Çанталăк çав çул питĕ сивĕ тăчĕ – 40-50 градус та пулĕ, çапах чăтнă, ӳпкелешмен. Юрать, каярах çывăхри ялсенче пурăнакансемпе калаçса хваттерсене вырнаçтарчĕç».

Вăрçăран хăрушă хыпарсем килме пуçланă. Кĕçех Хĕлимун пиччĕшĕ вăрçă хирĕнче пуç хуни çинчен пĕлтереççĕ. Вăрçă ачапăчана пĕр кун хушшинче çитĕннисен шутне кĕртет. «Арçынсем çĕр-шыва сыхлама ăсанчĕç. Эпир те 13-14 çулхи ачасем аслисемпе танах ĕçленĕ. Лашапа пĕччене х çӳренĕ, вăрмантан йывăç турттарнă. Икĕ метрлă пăчкăпа икĕ енчен икшерĕн туртса юман татнă. Пăравус кăмаки валли çуршар метрлă вут хатĕрленĕ. Куç хупмасăр, ларса канмасăр кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ. Анне кантăр вăрринчен тӳсе йăва тата кĕсел вĕретсе пани пысăк савăнăç пулнă», – калаçăва хутшăнать Маюк аппан икĕ сыпăкри 86 çулти йăмăкĕ Татьяна Павловна Андреева.

### Ӳт ашланиччен

Патшалăхăн пилĕк çуллăхри строительство планĕпе Шупашкартан сакăр çухрăмри вăрманта 320-мĕш номерлĕ завод (каярах Чапаев завочĕ) тума палăртаççĕ. Пĕр вăхăтрах бараксем, ача сачĕ, тухтăр пункчĕ, шкул, мунча, пушар хуралĕ çĕкленĕ. Вăрçă çулĕсенче унта çар хатĕрĕсем тума пуçлаççĕ. Маюка çар комиссариатне чĕнсе ыранах заводра пулма повестка тыттараççĕ. Амăшĕ йĕре-йĕре сухарипе ытти апатçимĕç хатĕрленĕ. 64 çухрăмри хулана Маюка аслă аппăшĕ Ухвине лашапа ăсатнă. Шăп 19 çул тултарнă кун заводра ĕçлеме тытăнать. Хăйĕн табель номерне паянхи пек ас тăвать: 1014-мĕш. Маюка 513-мĕш мастерскойне снарядсем тиеме яраççĕ. Ултă уйăх маларах вара çакăнта снаряд çурăлнипе 16 çын вилнĕ, 19-ăн аманнă. Питĕ асăрханса ĕçлеме тивнĕ. «Саваламан ешчĕксене хул пуççипе йăтаттăмăр, ӳт-пӳ кайланса каятчĕ. Пĕринче ыратнине чăтаймасăр мастер патне пынăччĕ. «Сан вырăна кама лартас?» – терĕ кăна. Урана тăхăнмалли пулман: çăпатапа пир тăла хăвăрт çĕтĕлнĕ, ытларах çарран ĕçленĕ. Тар çинипе кĕпе çĕтĕлетчĕ, ялан выçă. Ытла йывăр пулнă-çке вăрçă çулĕсем», – тутăр вĕçĕпе куçне шăлать кинемей.

### Çулсем-йĕрсем

Тăван ялĕпе амăшне курассишĕн тунсăхласа çинĕ хĕр утмăл ытла çухрăма çурранах çӳренĕ. Ир тухса кунĕпе утнă. «Çанталăк кĕр енне сулăннă. Яла çитме икĕ виçĕ çухрăм юлчĕ. Урараn ура иртми пулчĕ, куççуль юхать. Халран кайнипе пĕр киле кĕрсе çĕр каçрăм, ирпе кăна анне патне çитрĕм», – тăсăлать пирĕн калаçу. Каярахпа Шупашкарпа Канаш хушшинче пуйăс çӳреме пуçлать. Маюкăн яла килсе кайма çул кĕскелет, Мăн Супартан Кушар Юнтапана çитме 20 çухрăма яхăн кăна юлать. Çак çул-йĕр тепĕр аса илӳпе юлнă. «Хулана каяс кун çил-тăман тухрĕ. Йысна лашапа ăсатма килĕшрĕ. Пĕр вунă çухрăм кайсан çул хытти çухалчĕ. Çавал урлă каçнă чухне çуна кӳлнĕ ут юр кĕрчĕ ăшне кĕрсе ӳкрĕ. Лашана тăварса ури айне аçам хурса сăхман тăрăх çырмаран хăпартăмăр. Пуйăс çине ĕлĕкреймесен çар трибуналĕ кĕтет тесе сасăпа макăратăп хам. Антун йысна лашана питĕ хытă хăваларĕ. Çитсе тăнă пуйăс çине ларса ĕлкĕртĕмех».

Çĕнтерĕвĕн асаплă çулĕпе утса тухнă Маюкăн пурнăçĕ майĕпен йĕркеленсе-майлашăнса пырать. Вăрçă хирĕнчен сывах таврăннă Александр Никитинпа 1948 çулта çемье çавăраççĕ. Мăшăрĕ заводри пушар хуралĕнче ĕçлет. Завод директорĕ Иван Захарцев вĕсене баракра пысăкрах пӳлĕм уйăрса парать. Çамрăк мăшăра Маюк амăшĕ ĕнепе сысна çури парать. Чĕре айĕнче пепке тĕвĕленсен çамрăк хĕрарăм хăйшĕн мар, ачисемшĕн пурăнма пуçлать. «Тавах аннене пире пурнăç çулĕ çине тăма пулăшнăшăн. Хуçалăхра ĕне усрани тăватă ачана ура çине тăратма пулăшрĕ», – амăшне ырăпа аса илет Мария Петровна.

Вăхăт шунă май Никитинсен çемйи Чапаев поселокĕнче йывăç пӳрт лартать. Маюк аппа кил-çурт тавра чечек, улмаçырла, пахча çимĕç ӳстерет. Пушă вăхăтра ал ĕçĕпе ларать. Тем те тӳснĕ, анчах çынлăха çухатман тăрăшуллă хĕрарăма «1941-1945 çулсенче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн», «Ĕçре палăрнăшăн» медальсемпе, «Ĕç фрончĕн участникне» паллăпа тата ытти наградăсемпе чысланă.

Ывăлĕ-хĕрĕсем, мăнукĕсем ăна чунтан юратаççĕ, килсех тăраççĕ, пулăшаççĕ. Лайăх ят мултан та пахарах. Чăн та, çĕр çинче ырă ят хăварнинчен хаклăраххи çук.

**Надежда НАЛИМОВА–ЧУДАКОВА.**
**Вăрнар районĕ.**

**СДАЕМ В АРЕНДУ**

АУ «Издательский дом «Хыпар» предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, д. 13 для использования под офис.

Со всеми вопросами обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.

**ÇЫРĂНТАРУ-2014**

«Тăван Атăл», «Капкăн» çырăнсан тунсăхламăн, тусăм, нихăçан!

ТĂВАН АТĂЛ

КАПКĂН

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, ака уйăхĕн 14-мĕшĕ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛ ПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
23.45 «КАЧЕСТВО» (12+)

**Ытлари кун, ака уйăхĕн 15-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЗМЕНИМ МИР» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ХУДОЖНИК М. С. СПИРИДОНОВ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
20.30 «ОТЛИЧНЫЕ СТУДЕНТКИ» (12+)
21.00 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)

**Юн кун, ака уйăхĕн 16-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «ÇУРХИ ТĔНЧЕ ВĂРАННĂ ЧУХ...» Г. ЛЕБЕДЕВ 100 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ МАЙ (0+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «ОТЛИЧНЫЕ СТУДЕНТКИ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
23.45 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)

**Кĕçнерни кун, ака уйăхĕн 17-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «КАЖДЫЙ ИМЕЕТ ПРАВО» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «АВАН-И» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
20.30 «40 ЛЕТ ЛЕНИНСКОМУ РАЙОНУ» (6+)
20.45 «АКТУАЛЬНОЕ ИНТЕРВЬЮ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)

**Эрне кун, ака уйăхĕн 18-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «ОТЛИЧНЫЕ СТУДЕНТКИ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (6+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
00.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)

**Шăмат кун, ака уйăхĕн 19-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «НАОБУМ» (12+)
9.30 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (12+)
10.00 «КУÇА КУÇĂН». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (6+)
17.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
17.30 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
18.00 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (12+)
18.30 «КАЧЕСТВО» (12+)
19.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
19.30 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (6+)
20.00 «АКТУАЛЬНОЕ ИНТЕРВЬЮ» (12+)
20.15 «РЫКАКАССИ». ИЛЕМЛĔ ТЕЛЕФИЛЬМ (12+)
23.00 «ПАСХА ХРИСТОВА 2014». ПРЯМАЯ ТРАНСЛЯЦИЯ ИЗ ПОКРОВСКО-ТАТИАНИНСКОГО СОБОРА

**Вырсарни кун, ака уйăхĕн 20-мĕшĕ**
9.00 «ТАРÇĂ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (16+)
15.00 «ОТЛИЧНЫЕ СТУДЕНТКИ» (12+)
17.00 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)
18.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
18.30 «ХЫРĂМ ТЫТСА КУЛАР-ХА!» В. ПЕТРОВ ШОУ-КОНЦЕРТ (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Ака, 9 – юн кун | Ака, 10 – кĕçнерни кун | Ака, 11 – эрне кун | Ака, 12 – шăмат кун | Ака, 13 – вырсарни кун | Ака, 14 – тунти кун | Ака, 15 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 6.01 | 5.59 | 5.56 | 5.53 | 5.51 | 5.48 | 5.46 |
| | анать | 19.45 | 19.47 | 19.49 | 19.51 | 19.53 | 19.55 | 19.57 |
| Кун тăршшĕ | | 13.44 | 13.48 | 13.53 | 13.58 | 14.02 | 14.07 | 14.11 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулли уйăх (11.41) |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 10-мĕш кун | 11-мĕш кун | 12-мĕш кун | 13-мĕш кун | 14-мĕш кун | 15-мĕш кун | 16-мĕш кун |
| | | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче |

## ЯТ-СУМ

# Ял сăвăçи

**Гаврил Алексеевич Кореньков – Каринкке Кавĕрли – чăвашсен çыруллă поэзине пуçаракансенчен пĕри, педагог, куçаруçă, шкул учебникĕсен авторĕ. Куславкка чăвашĕ. Кивĕ Тĕрлемес ялĕнче 1884 çулхи ака уйăхĕн 5-мĕшĕнче çуралнă. Лара-тăра пĕлмен ача çирĕп сывлăхлă ӳснĕ. Ашшĕ матрос пулнă, икĕ çул вăл ачине Атăл тăрăх илсе çӳренĕ. Хăйăр çинче ӳкерчĕксем тутарнă, картунран сас паллисем касса хутла вĕрентнĕ – тавра курăмне ӳстернĕ.**

Саккăрта ашшĕ ăна ялти шкула илсе каять. Хутла пĕлет тесе Кавĕрлене тӳрех иккĕмĕш класа илеççĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕрсен И.Я.Яковлев ăна хутла япăх пĕлет тесе хĕр ачасен класĕнчи парта хушшине лартать. Паллах, класра Кавĕрле хăйне шурă курак пек туйнă. Тен, çавăн чухне кӳренни каярахпа сăвăçа хăйĕн хайлавĕсенче хĕрарăм сăнарне питĕ хăйне евĕрлĕ калăплама май панă. Икĕ çултан тин вăл арçын ачасемпе пĕрле вĕренме тытăнать.

Пулас поэт литература ĕçне 1901 çулта тытăннă. Шкулта вăл çамрăк сăвăçсен ушкăнне йĕркеленĕ. Пĕр вăхăт алăпа çырса журнал кăларса тăнă. "Вĕреннĕ чухне Пушкина, Лермонтова тата Крылова каçса кайса вулаттăм, хам та çыркалаттăм, – аса илнĕ каярахпа Гаврил Алексеевич. – Ун чухне чăваш литератури аталанса ĕлкĕрейменччĕ, çавăнпа мана сăвăсем çырма çăмăлах марччĕ..." Çамрăк Кавĕрле шкулти литературăпа музыка каçĕсене çӳрет, спектакльсем лартма хутшăнать.

Гаврил Кореньков мĕн ачаран тăван яла чунтан юратнă. Ытарайми тавралăхпа, Тĕрлемес урамĕсемпе пахчисен илемĕпе киленнĕ. Пĕтĕм пурнăçа ӳнерçĕ куçĕпе курнă. Ял ялах ĕнтĕ. Юнашар чукун çул станцийĕ. Тарăн çырма урлă – Йăлăм, Çĕнĕ Тĕрлемес. Уй куçлă, вăрман хăлхаллă теççĕ те, ялăн куçĕ те, хăлхи те пĕрле. Вăл йăлтах курать, пĕтĕмпех илтет. Пурте ал лаппи çинчи пек. Кам кампа тĕл пулнă, мĕн калаçнă, кам пирки мĕн каланă. Кам пахча хысçĕпе çӳрет, камăн качаки кĕтӳрен килмен... Кунта нимĕнле пытарăнчăк ĕç-пуç та çук. Пулма та пултараймасть. Эс паян мĕн турăн – ыран ăна пĕтĕм ял-йыш пĕлет. Çывăхри уй та куçлă, вăрман та хăлхаллă – пурнăç çавнашкал. Унăн малтанхи сăвви те "Пирĕн ял" ятлă.

*Икĕ çырма хушшинче*
*Эпир ӳснĕ ял ларать.*
*Аслă урам варринче*
*Чиркӳ тăрри курăнать.*

*Ялăн икĕ айккипе*
*Хурăн çулĕ çаврăнать,*
*Икĕ çырма тăрăшпе*
*Йăмра ушкăнь чашкăрать.*

Ăста сăнарланă Кивĕ Тĕрлемес тăрăхне сăвăç! Уйра ешĕл калча тăррисем хумханаççĕ, вĕсене курса тӳпере тăрисем савăнаççĕ. Юнашар хура вăрман сарăлса ларать. Ун умĕнчен пăравус шăхăрса иртет. Шухă лаша çил-тăманра çул хыттине туйнă пекех туять вăл чĕлхе илемне, тирпейлĕхне.

Сăвăç XX ĕмĕрĕн малтанхи çулĕсенче 150-а яхăн сăвă-юрă, юмах-поэма хайланă. Унăн лирикинче пейзаж, юрату, философи темисем паллă вырăн йышăнаççĕ. Сăввисенче лирик тата сатирик кăмăлĕ çураçуллă пĕрлешнĕ. Вăл И.А.Крыловăн 20 юптарăвне, А.С.Пушкинăн "Пулăçпа ылтăн пулă" юмахне чăвашла куçарнă. Мĕтри Юман аса илнĕ тăрăх – "Кавĕрле Атăл çинче çĕнĕрен таса чăваш хули тăвас, çав хулана пĕтĕм маттур чăвашсене пухса культура ĕçне хăвăртлатса ярас тесе" ĕмĕтленнĕ. Çапла шухăшламан çын алла калем те илмĕччĕ. Вăл "Хыпар" хаçатпа çыхăну тытать, унта "Ĕçлеме чĕнни", "Тăлăх арăм" сăввисене тата темиçе куçарăвне пичетлет. 1903 çултан пуçласа мĕн виличченех тăван ялĕнче, Кивĕ Тĕрлемесре, учитель, завуч, унтан шкул директорĕ пулса ĕçлет.

Саманапа пĕр тан утать ял сăвăçĕ. 1904-1905 çулсенче Раççей Яппун вăрçинче пысăк çухатусем тӳсет. "Хăрушла çумăр" сăвăра Кореньков халăхăн нушаллă пурнăçне хăрушла çумăрпа танлаштарать.

*Самани те латлă мар,*
*Кунĕн-çĕрĕн юн юхать.*
*Тырри-пулли пит начар,*
*Вăл та пулин хуралать.*

Унăн куçару ĕçĕсем уйрăмах ăнăçлă пулса пынă. Вырăс литературин стильне упраса хăварас тесе тăрăшать, халăх сăмахлăхĕнче çирĕпленнĕ çаврăнăшсемпе усă курать. Пурăна киле вĕсем вĕренӳ кĕнекисенче пичетленеççĕ, сцена çинчен янăраççĕ. Ахальтен мар Петĕр Хусанкай "Улмуççиллĕ Тĕрлемес" поэмăра Гаврил Коренькова "Крылов тăлмачĕ" тесе ят панă. "Шăрчăкпа Кăткă" юптарăвăн йĕркисене аса илер-ха:

*Тринкки-тринкки сикекен*
*Шăрчăк тусăн юрласа,*
*Çу иртни те сисĕнмен...*

Ачасене питĕ юратнă вăл. Вĕсемпе спектакльсем лартнă, хор йĕркеленĕ. Империализм вăрçи вăхăтĕнче учительсем ĕç укçи питĕ сахал илнĕ. Ял çыннисем ăна пупра ĕçлеме те сĕннĕ теççĕ. Вăл килĕшмен. "Выçса вилес патне çитсен те шкултан кайма пултараймастăп", – лăплантарнă вĕсене.

1914 çулта вăл "Хурăн юрри" тĕрленчĕк çырать. Хĕр пек тӳп-тӳрĕ хурăн – тăван вырăн палли, ĕлккен те, савăнăçлă йывăç. Сип-симĕс тумлă, шурă уралла. Чĕрченлĕхĕ – ытарайми. Тăван тавралăх юрăçи шурă хурăнăн икĕ пĕчĕкçĕ турачĕ çинчен тунсăхлă юрă кĕвĕлет. Пач çĕнĕлле, хăйне майлă.

Гаврил Кореньков чăваш литературинче савăшу лирикине – "эротикăллă реализма" – пуçарса яракансенчен пĕри. Чылай сăвви ятсăр. Туйăмсен серепине лекнĕ сăвăç хăйĕн чунне вулакана ĕненмелле уçса парать. Пĕрре вăл улăп пек арçын, тепре мемме – пуçне çухатнă ("Эпĕ çӳп пек сан куçра"). Туллашать, кĕвĕçет, асапланать, иккĕленет, йĕрĕнет, намăсланать, вут пек çунать...

Вуласа пăхар-ха сăвăç хĕрарăмпа епле киленнине:



*"Эсĕ манăн сар чечек.*
*Пĕрмай сана шăршлăттăм...*
*"Сана курсан кашнинче*
*Пĕчĕк ача пулăттăм"...*

Хитре хĕрарăма курсан, сăвăçăн юнĕ выляма пуçлать:

*Миçе хĕре юратса,*
*Миçе хĕртен уйрăлтăм.*
*Кайран пĕрне тĕл пулса,*
*Хĕр чĕрине тин пĕлтĕм...*

Поэт туйăмсен тӳпинче эротика туртăмĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине тĕпе хурса çырнă. "Ват çын вăтанманнине эпир ăмма вăтанас?" – тет вăл юратăвăн çак вăрттăнлăх енне аса илтерсе. Хĕрарăма тĕрлĕ енчен хак парать, хирĕçӳллĕ сăнлать: "Малтан астаран – кайран пистерен". "Пит кăмăла килетĕн, анчах пăртак куштанрах". Хĕрарăм уншăн "чечек", "сар кайăк", "сар чечек", çав хушăрах "ансăр çамка", "шуйттан"...

Тепĕр чух сăвăç хăй те вăрçăнса каять.

*Хĕрарăмăн вăрçасси –*
*Пĕр наччасах пулать-мĕн.*
*Хĕн вĕсемпе пурнасси.*
*Пит час турти татлать-мĕн.*
*Пит час вĕсем пĕр-пĕрне*
*Яра-яра илеççĕ,*
*Чипер ларас вырăнне*
*Пĕрне-пĕри çиеççĕ:*
*"Пĕрин кĕпи кĕскерех,*
*Теприн арки йĕперех".*
*Шуйттан пĕлет вĕсене!*
*Этем пĕлмĕ вĕсене.*

Савăшу сăввисене поэт 1906-1915 çулсенче çырнă. Унăн "Иванпа Хĕветле" поэма-юмахне те асăнса хăвармалла. Хайлавра арçынпа хĕрарăм хутшăнăвĕсене чăваш фольклорĕнчи евĕр шӳтлесе сăнлать. "Тавçăруллă арçынсем" "айванрах хĕрарăмсен" пуçĕсене çавăрнисем, тем тĕрлĕ пăтăрмах пулса иртеççĕ кунта. "Иванпа Хĕветле" Константин Ивановăн "Нарспи" поэмине çывăх. Иккĕшĕн те сюжет никĕсĕ чухăн каччăпа пуян хĕр юратăвĕ çинче аталанать. Гаврил Кореньков поэминчи ар хутшăнăвĕсем уççăнрах тухса тăраççĕ, "Нарспире" – пытарăнчăклă та трагедиллĕ. Хайлав вĕçĕнче Иванпа Хĕветле телейлĕ: вĕсем – пĕрле, мул тупаççĕ, ар канăçлăхĕпе килĕшӳлĕх тĕнчинче киленеççĕ. Çут çанталăк панă телейпе савăнаççĕ.

Гаврил Кореньков совет саманинче сахал пичетленнĕ. Хаçат-журнал редакцийĕсене çӳремен. Вăхăчĕ те пулман. Унăн пултарулăхĕнче Октябрьти революцие, çул пуçсене мухтакан сăвăсем те курăнмаççĕ. 1919 çулта вăл хăйĕн сăввисене уйрăм кĕнекен кăларма хатĕрленĕ. Пăтрашуллă лару-тăрура унăн ал çырăвне Мускава илсе кайнă чухне çухатнă. 1920-1930 çулсенче вăл шкулта вĕренмелли кĕнекесем кăларнă. Вĕсен хушшинче – "Рабочая книга по математике", "Учебник русского языка", "Санитарипе гигиена навыкĕсем" ятлисем пур.

Кăмпа ялта ӳсет, анчах ăна хулара та пĕлеççĕ тетпĕр-и-ха? Гаврил Кореньковăн поэзири пултарулăхĕ нумай çамрăк чĕринче тарăн йĕр хăварнă. "Чăваш литературипе чи малтан букварьти пĕчĕк калавсем тăрăх, унтан "Хыпар" хаçатра пичетленнĕ сăвăсемпе калавсем тăрăх паллашнă, – çырнă Çемен Элкер "Чăваш совет литературин калчисем" аса илĕвĕнче (ал çыру). – Ун чухнехи "Хыпар" тин çеç литература ĕçне тытăннă çамрăк чăваш поэчĕсен сăввисене час-часах пичетлесе кăларатчĕ. Вĕсенчен мана Тайăр Тимккипе Гаврил Кореньков, Яков Турханпа Тăван ялсем (Сорокин) тата Николай Полоруссов сăввисем кăмăла каятчĕç".

Шел, чăваш вулаканĕсем патне паян кун та Гаврил Кореньков поэмисемпе сăввисем çитеймерĕç-ха. Хăй вăхăтĕнче Михаил Сироткин профессор унăн хайлавĕсене "Незначительные интимно-лирические произведения" тесе хакланă. Геннадий Юмарт, Юрий Артемьев, Анатолий Васильев-Васан, Валентин Абрамов тĕпчевçĕсем Кореньков поэзийĕ революцичченхи чăваш литературинче паллă вырăн йышăннине палăртрĕç. "Каринкке Кавĕрлин поэзийĕ, унăн хăйне евĕрлĕхĕ – пирĕн куç умĕнче тенĕ пекех, халĕ çеç, – тĕлĕнтерсе, куça шартарса уçăлать, – тесе çирĕплетнĕ Геннадий Айхи поэт. – Чăннипех парадокслă поэзи! Каринкке – пирĕн лирикăри пĕрремĕш модернçă, пурнăçра çӳлтипе аялти шайсене чăрсăррăн, артистла хӳхĕмлĕхпе пĕрлештерсе, калама юраман япаласенчен ирĕклĕн, шӳтле çăмăллăхпа чăн-чăн поэзи паллисем туса, пирĕн поэзие вăл... пуянлăхăн паллисене те кĕртет! – тĕлĕнмелле, çакна тума тытăннин çĕр çуллăхне те палăртмалла пулать ĕнтĕ".

Çут ĕçĕнче нумай вăхăт хушши пархатарлă ĕçленĕшĕн Гаврил Кореньков "РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ" ята тивĕçнĕ, ăна Ленин орденĕ парса чысланă. Поэт 1949 çулхи пуш уйăхĕн 19-мĕшĕнче пурнăçран уйрălса кайнă.

**Герман ЖЕЛТУХИН.**


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**216. Шпагат сеновязальный.** Дешево. Тел. 8-927-851-68-58.

**217. Грабли от 24 тыс. руб., плуги, картофелесажалки, окучники, фрезы, косилки.** Низкие цены. Все новое! Доставка. **Тел. 8-937-388-50-89.**



«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 [1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 1259 Тираж 4427

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.